1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

48 /26454/№ Ытлари кун, 2014, пуш (март), 18 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru


## Пĕрремĕш класа – хальхинчен ытларах

***Пуш уйăхĕн 17-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республика Правительствин членĕсемпе, федерацин ĕç тăвакан влаçĕн территори органĕсен тата хула округĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.***

Канашлу пуçламăшĕнче республика Пуçлăхĕ пурне те Раççей команди Паралимп вăййисенче ăнăçлă ăмăртнă ятпа саламланă.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Крымра пуш уйăхĕн 16-мĕшĕнче иртнĕ референдум кăтартăвĕсемпе паллаштарнă. Малтанлăха пĕлтернĕ тăрăх – Крым Раççей Федерацийĕпе пĕрле пултăр тесе суйлавçăсен 96,7% сасăланă. «Ку вăл Крымра пурăнакансем хăйсен пуласлăхне Раççей йышĕнче çеç курни çинчен калать», – палăртнă Михаил Игнатьев.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Шупашкарта пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче тăванла Крым халăхне хавхалантарас тĕллевпе ирттернĕ митинга йĕркеленĕ тата хутшăннă çынсене тав тунă.

Шупашкар хулин пуçлăхĕ Леонид Черкесов пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче 18 сехетре Республика тӳремĕнче Крым çыннисен йышăнăвне ырласа митинг ирттерме хатĕрленнине пĕлтернĕ.

ЧР вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов Федерацин «Раççей Федерацийĕнчи вĕренӳ çинчен» саккунне тата республикăн «Чăваш Республикинчи вĕренӳ çинчен» саккунне мĕнле пурнăçлани çинчен каласа кăтартнă. Нумай ашшĕ-амăшне хумхантараканни – пĕрремĕш класа йышăнассипе çыхăннă ыйту.

2013-2014 вĕренӳ çулĕнче Чăваш Енри шкулсенче пĕрремĕш классенче 12827 ача вĕренет. 2014-2015 вĕренӳ çулĕнче 1-мĕш классене 13565 ача пырĕ /738 çын ытларах/. ЧР Вĕренӳ министерствин ертӳçи палăртнă тăрăх – пĕрремĕш класс ачисене йышăнма шкулсенче вырăн çителĕклĕ.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ илессине тивĕçтерме муниципалитетсем пайăр шкулсем тăрăх уйрăм территорисене çирĕплетнĕ, Шупашкар хулинчи хăш-пĕр шкулта хушма пĕрремĕш классем уçĕç. Ачасене пĕрремĕш класа пурăннă вырăнта тĕрĕслевсĕрех илмелле. Çирĕплетнĕ территорире регистрациленисене шкулта ирĕклĕ вырăнсем пулмасан çеç пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацие йышăнмĕç. Çакăн пек чухне ашшĕ-амăшĕн муниципалитет районĕн е хула округĕн вĕренӳ управленийĕн органне ыйтăва татса пама пымалла.

«Кашни ашшĕ е амăшĕ хăйĕн ачишĕн пăшăрханать. Вĕсемпе тĕл пулмалла, тавлашуллă ыйтусене татса памалла», – тенĕ Михаил Игнатьев.

ЧР транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министрĕ Михаил Янковский федераци, республика тата вырăнти пĕлтерĕшлĕ автомобиль çулĕсем çинче вак юсав ĕçĕсем ирттерни çинчен каласа кăтартнă. Пурĕ 40 бригада ĕçлет, вĕсен 88 пин тăваткал метр çула юсамалла. Паянхи кун тĕлне регион çулĕсем çинче ĕçсен пĕтĕмĕшле калăпăшĕнчен 70% пурнăçланă, вырăнтисем çинче – 45-50%. Чăваш Ен Пуçлăхĕ хула округĕсен ертӳçисен автомобиль çулĕсемшĕн яваплă пулмаллине аса илтернĕ.

■ **Т.СИДОРОВ**

# Крым – Раççейпе пĕрле!




***Пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарти Хĕрлĕ тӳремре Украинăра пурăнакан ентешĕмĕрсене хавхалантарас тĕллевпе митинг иртрĕ. Унта пĕтĕмпе 10 пине яхăн çын хутшăнчĕ /ЧР Шалти ĕçсен министерствин кăтартăвĕсем тăрăх/.***

Украинăра мĕн пулса иртни Раççейри, çав шутра Чăваш Енри, халăха та пăшăрхантарать. Крымра пурăнакансен йышăнăвне – Автономи Республикин шăпине палăртасси пирки референдум ирттерессипе çыхăннине – ырлас тĕлĕшпе юлашки икĕ эрнере пĕтĕм çĕр-шывĕпех тĕрлĕ мероприяти йĕркелеççĕ. Чăваш Ен çыннисем те çак тĕллевпех Шупашкара митинга пухăнчĕç. Волонтерсем Георгий хăйăвне валеççе пачĕç. Ку акцие чылайăшĕ тĕплĕн хатĕрленнĕ: транспарантсем, хăйсем тĕллĕн ăсталанă плакатсем илсе килнĕ. Вĕсен тексчĕсем пурин те пĕрешкелтерех: чăваш халăхĕ Крым халăхĕ майлă.

Хальхи вăхăтра Крымра Чăваш Енре çуралнă 2,5 пин ытла çын пурăнать. Чăваш Республикипе Украинăна тахçанах йĕркеленнĕ экономика тата культура хутшăнăвĕсем çыхăнтараççĕ. 1941 çулта Харьковри электроаппаратура заводне Шупашкара эвакуациленĕ, Киевран – хăю тĕртекен фабрикăна, шăпах вĕсем хула промышленноçне пуçарнă. Харьковра Алексей Кокель чылай çул ĕçлесе пурăннă. Çеçпĕл Мишши поэт та юлашки çулĕсене Украинăра ирттернĕ, ăна унтах пытарнă. Çак самантсене те аса илчĕç митингра.

Ку акцие йĕркелекенсем – çамрăксен, хĕрарăмсен, ветерансен общество организацийĕсем, профсоюзсем. Политика партийĕсем те çак кун пĕрешкел шухăша палăртрĕç. «Чун ыратăвĕ пĕтĕм политика партине пĕрлештерет», – терĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май. Вăл митинга регион ертӳçи пек мар, чи малтан Раççей гражданинĕ пек – чун-чĕре ыйтнипе – килнине пĕлтерчĕ.

Украинăра мĕн пулса иртни унта çуралса ӳснисен чĕрине уйрăмах ыраттарать. Вĕсем çĕнĕ хыпарсен кăларăмĕсене пурне те пăхаççĕ, тăванĕсем патне куллен шăнкăравлаççĕ. Акă Лариса Комарова Киев облаçĕнчи Володарка ялĕнче пурăннă. 1995 çулта вăл мăшăрĕн тăван çĕр-шывне – Чăваш Ене – куçса килнĕ. Украинăра Лариса Ивановнăн иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ çемйипе пурăнать. «Каçхине ниçта та тухмаççĕ вĕсем, урамра вырăс сăмахне илтсен тӳрех пеме пуçлаççĕ-мĕн. Киевăн тĕп урамĕ – Крещатик – мĕнле хитреччĕ малтан, тĕрлĕ çĕртен килнĕ çынсем унпа киленетчĕç. Халĕ вара ăна йăлт ирсĕрлетсе пĕтернĕ», – чун ыратăвне пытармасть хĕрарăм. Украинăри Винница облаçĕнчи Ямполь хулинче çуралса ӳснĕ Галина Щербина сцена çине тухса калаçрĕ: «Эпир Украинăра пурăннă, ача-пăча çуратнă, ыранхи куна çутă шанăçпа кĕтнĕ. Çак шанчăк пĕр самантрах çухалчĕ. Политика лару-тăрăвĕ тăнăçсăр çĕр-шывра пурăнма çав тери йывăр. Çавăнпа хуçалăха йӳнĕпе сутма, Раççее ачасем патне куçса килме тиврĕ. Эпĕ пĕлĕшсем патне кашни кун шăнкăравлатăп. Вĕсене унта халĕ питĕ йывăр, кашниех хăйсен ачисемпе мăнукĕсен малашлăхĕшĕн пăшăрханать. Эпĕ те паян кунта килтĕм, ыттисем пекех – Украинăри тата Крымри тăванла халăха хавхалантармашкăн. Тавах сире, ыră çынсем, кăмăлсипет тата укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен Украина халăхне пулăшнăшăн!»

Митинга килнисенчен чылайăшĕ хăйĕн шухăшне палăртрĕ. «Пирĕн кӳршĕсем инкеке лекрĕç, унта çынсене вĕлереççĕ. Хăйсене хăйсем влаçа лартнисем фашизма çывăх йĕркесем çирĕплетеççĕ. Эпир таса чунлă çынсем майлă», – терĕ саппасри пĕрремĕш рангри капитан Валерий Родионов. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă, 19 çулта Орел-Курск çапăçăвĕнче тăшманпа кĕрешнĕ, Днепр урлă каçнă Владимир Никитинский те Украина пуласлăхĕшĕн кулянать. Вăл хăйсен ротинче Украина çынни нумай пулнине аса илчĕ. «Украина ял-хули витĕр тухнă чухне пире унти халăх яланах çăкăр-тăварпа, сĕтпе кĕтсе илетчĕ. Эпир фашизм мĕн иккенне паян та лайăх ас тăватпăр. Халĕ Украинăра фашизм çĕкленнине чуна ыраттарса сăнатпăр», – терĕ ветеран.

РФ Федераци Канашĕн членĕ Галина Николаева Украина халăхне пулăшас тĕллевпе мĕнле ĕçсем туни пирки каларĕ. Федераци Канашĕ Раççей регионĕсен ертӳçисене тăванла халăх валли укçа-тенкĕ тата гуманитари пулăшăвĕ йĕркелемешкĕн, предприяти-организацисен хушшинчи çыхăнăва çирĕплетмешкĕн ыйтнă. Сенатор Крымра пурăнакансемшĕн кирек мĕнле пулăшу та пĕлтерĕшлине палăртрĕ. Сăмах май, пирĕн республикăра Крымри тата Севастопольти çынсем валли укçа куçармашкăн счет уçнă, ăна «Раççей Хĕрлĕ Хĕресĕ» общество организацийĕ йĕркелесе пырать.

Акцие Севастопольти чăваш наци-культура обществин председателĕн çумĕ Владимир Мочалов та хутшăнчĕ. Ăна Галина Николаева сенатор чăваш наци костюмĕ парнелерĕ. Владимир Александрович республикăра пурăнакансене чăвашсен авалтан пыракан ыră йăлине – нимене – манманшăн, ентешсене йывăр вăхăтра пулăшнăшăн чĕререн тав турĕ.

Митинга килнисем юлашкинчен резолюци йышăнчĕç. Унта Раççей тата Украина халăхĕсен пин çуллăха пыракан пĕрлĕхне нимĕнле чикĕ те аркатайманнине, вĕсем пĕрле тĕрлĕ йывăрлăха чăтса ирттернине палăртнă. Раççей тата Чăваш Ен ертӳлĕхĕн Украинăри тăванла халăха пулăшас тĕллевпе тăвакан ĕç-хĕлне митинга хутшăннисем ырланине асăннă.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

### Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ çирĕммĕш сессине пухасси çинчен

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ çирĕммĕш сессийĕ 2014 çулхи пуш уйăхĕн 20-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи Правительство çуртĕнче /Президент бульварĕ, 17-мĕш çурт/ 10 сехетре уçăлать.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсемпе чĕннĕ хăнасене пуш уйăхĕн 20-мĕшĕнче Правительство çурчĕн ларусен пысăк залĕн фойинче 9 сехетрен пуçласа регистрациленеççĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефон: 64-21-65.

## КУН хыççăн КУН ☎ 56-04-26

### Кăмăл-сипете мала хурса

***Федерацин Атăлçи округĕн регионĕсен хушшинче 2013 çулхи çурла уйăхĕнчен тытăнса 2014 çулхи пуш уйăхĕччен педагогсен «Серафимовский учитель» конкурсĕ иртнĕ.***

Унта хăйсен ĕçĕнче кăмăл-сипет воспитани-вĕрентĕвне мала хуракансем тупăшрĕç. Вĕрентекенсен тĕллевĕ – çитĕнекен ăрушăн чунпа аталанма май паракан хутлăх тăвасси.

Конкурса пурĕ 237 çын хутшăннă, 197 ĕç (урок е класс сехечĕн планĕсем, тĕрлĕ мероприяти сценарийĕсем) тăратнă. Чи хастаррисем – Чул хула, Сарă ту, Самар тăрăхĕсенчи тата Чăваш Енри вĕрентекенсем. Педагогсем – вĕрентĕвĕн тĕрлĕ статусĕллĕ учрежденийĕсенчен.

Жюри ĕçсене тĕплĕн тишкернĕ хыççăн çĕнтерӳçĕсене палăртнă. Пирĕн республикăран вĕсен йышне тăххăрăн кĕнĕ. Çав ушкăнра – Вăрнар районĕнчи Калининăри вăтам шкул вĕрентекенĕ Юлия Ивановна Войнова та. Хăйсене тивĕçнĕ наградăсене çĕнтерӳçĕсем пуш уйăхĕн вĕçĕнче Хĕрарăмсен Серафим-Дивеево мăнастирĕнче илĕç.

**В.МИРСКАЯ.**

### Ĕçтешĕсене пулăшнă

***Инçетри ĕçтешĕсене – Екатеринбург полицейскийĕсене. Шăпах вĕсем Чăваш Енĕн йĕркелĕх хуралçисенчен преступнике тупма пулăшмашкăн ыйтнă.***

Пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче Екатеринбургра такам пĕр автомашинăран пысăк укçа, 800 пин тенкĕ, вăрланă. Сыщиксем 33-ри арçын йĕрĕ çине ӳкнĕ, вăл Уралтан Чăваш Ене килни пирки информаци илнĕ. Кунта, Патăрьел районĕнче, унăн тăванĕсем пурăнаççĕ-мĕн.

Патăрьел полицийĕн пуçлăхĕ Владимир Чурбанов пĕлтернĕ тăрăх – чăваш полицейскийĕсем инçетрен килнĕ ĕçтешĕсене преступник ăçтине тупса палăртма пулăшнă. Лешĕ куккăшĕн автомашинипе çӳренĕ иккен. Тивĕçлĕ ориентировка илнĕ хыççăн ведомство тулашĕнчи хурал нарядĕ таркăна, вăрланă укçапа Канаша машина туянма каймашкăн çула тухнăскере, тытса чарнă. Укçи те – çумĕнчех.

**К.АНТОНОВ.**

### Юратрăм сана...

***Поэтсем «юратупа» «ыратăва» ахальтен рифмăламаççĕ çав. Ыратăвĕ юратупа юнашарах. Тепĕр чух – вилĕм те... Следстви комитечĕн Шупашкарти пайĕ тĕпчесе пĕтернĕ уголовлă ĕçри тĕслĕх – шăпах çак ретрен.***

22 çулти хĕр 25-ри савнийĕпе Шупашкарти Çĕнтерӳ урамĕнчи пĕр çуртра пурăннă. Çав кун вĕсем аптекăран 300 грамм темле эмел туяннă, ăна шывпа хутăштарнă та – 1,5 литр эрех хатĕр. Иккĕшĕ пĕрле ĕçнĕ. Эрехпе хĕрсе хăюланнă пулас та – хĕр савнийĕнчен уйрăлас кăмăлне пĕлтернĕ. Каччă вара яхăнне те яман – юратать вĕт!

Хирĕççех кайнă. Хĕр вара сĕтел çинчи çĕççе илнĕ те йĕкĕте кăкăрĕнчен чикнĕ. Чĕринчен лектернĕ – вилмеллех. Ӳсĕр хĕр çакăн хыççăн çывăрма выртнă. Савнийĕ вилнине вăл ирхине тин ăнланса илнĕ.

**Н.КОНОВАЛОВ.**

*Пĕтĕм чăваш диктанчĕ – 2014*

## Кашниех хутшăнтăр

***Чăвашла пĕтĕм халăхпа диктант çырма пуçăниччен уйăх ытларах вăхăт юлчĕ.***

Пуш уйăхĕн 17-мĕшĕнче Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче акципе çыхăннă тĕрлĕ ыйтăва хускатрĕç. Хаçатра çырнăччĕ ĕнтĕ: диктант çырас тĕлĕшпе яваплăх асăннă институт, «Хыпар» Издательство çурчĕ тата Чăваш наци телерадиокомпанийĕ çинче пулĕ. Паллах, çак ĕçе пĕтĕмĕшле Чăваш Республикин Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерстви йĕркелĕ. Сăмах май, ведомство Интернет-порталра ятарлă баннер уçĕ. Диктанта пĕлтĕрхиллех Интернет анлăшĕнче те итлесе çырма май килĕ.

Йĕркелӳ комитечĕ паян-ыранах республикăри вĕренӳ учрежденийĕсене, муниципалитетсен вĕренӳ ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пайĕсене, Чăваш наци конгресне /диктант çырма тулайри чăвашсем еплерех хутшăнассишĕн вăл яваплă/ çыру çитерĕ. Унта акци пирки тĕплĕн пĕлтерĕç.

Диктант текстне кам çырассине те татса пачĕç ларура. Сумлă çак ĕçе пурнăçлама Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Чăваш патшалăх телерадиокомпанийĕн ĕçченне, нумай кĕнеке авторне Марина Карягинăна шанчĕç.

■ **Ирина ИВАНОВА**

## Референдума пĕтĕмлетнĕ

***Крымра референдум хыççăн протоколсене 100 процентчĕпех пăхса тухнă. Çакăн çинчен ИТАР-ТАСС пĕлтерет. Официаллă кăтартусем тăрăх – суйлавçăсен 82,71% сасăлава хутшăннă.***

Суйлав участокĕсене пынисен 96,7% Раççейпе пĕрлешесшĕн пулнине палăртнă. Çакнашкал цифрăсем пĕлтернĕ Крым парламенчĕн сасăлава йĕркелес енĕпе ĕçлекен комиссийĕн пуçлăхĕ Михаил Малышев. Çак даннăйсене Севастополе шута илмесĕр кăтартнă. Вăл патшалăх пĕлтерĕшлĕ хула шутланать, Крым Автономи Республикин йышне кĕмест /унта референдума уйрăммăн ирттернĕ, сасăлава Раççей Федерацийĕпе пĕрлешес ыйтăвах тăратнă/.

Маларах Крым премьер-министрĕ Сергей Аксенов референдум иртнĕ тесе каланă. Крым Автономи Республикин правительствин пĕрремĕш вице-премьерĕ Рустам Темиргалиев ĕнер пĕлтернĕ тăрăх – Крым Раççей йышне кĕресси çинчен официаллă заявка хатĕрленĕ, депутатсем ăна йышăннă.

# Пĕр шухăш-тĕллевпе

***Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев политика партийĕсен парламентри фракцийĕсен ертӳçисемпе тĕл пулса канашлассине çирĕп йĕркене кĕртнĕ. Хальхинче те республика умĕнчи çивĕч ыйтусене сӳтсе яврĕç, мĕн пурнăçланине пĕтĕмлетрĕç, тĕллевсене палăртрĕç. Тĕл пулăва Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн спикерĕ Юрий Попов, Анатолий Князев, Андрей Кулагин, Игорь Моляков, Дмитрий Евсеев парламентарисем-фракци ертӳçисем, РФ Федераци Канашĕн членĕ Галина Николаева, Чăваш Ен Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов, Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин, Олег Марков, Алла Самойлова министрсемпе министр тивĕçне пурнăçлакан Светлана Енилина, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин регион уйрăмĕн секретарĕ Николай Малов депутат хутшăнчĕç.***

Михаил Васильевич Украинăра неонацистсем влаçа вăйпа хăйсен аллине çавăрса илсессĕн Крымри халăх Раççей ертӳлĕхĕнчен пулăшу ыйтни, Автономи Республики Раççей патшалăхĕн йышне субъект шучĕпе кĕме референдум ирттересси çинчен пĕлтерсен çĕр-шывĕпех, çав шутра – Чăваш Республикинче те, çакна ырласа йышлă халăхлă митингсем иртни çинчен пĕлтерчĕ. Референдум пĕтĕмлетĕвĕ паллă: унти халăхăн 96,7 проценчĕ Раççейпе пĕрле пуласшăн. РФ Патшалăх Думинче ку енĕпе документсем хатĕрлеме тытăннă та ĕнтĕ. Анăçри çĕр-шывсен ертӳçисем славян халăхĕн пĕрлĕхне уямасăр çакна аркатассишĕн тем пек çине тăраççĕ пулин те ĕмĕр-ĕмĕр Раççей çĕрĕ пулнă Крым кĕçех Раççей территорийĕ пулĕ. Çакна хирĕçле вăйсем часах лăпланаймĕç, çапах та вĕсен те истори тĕрĕслĕхĕпе-чăнлăхĕпе çырлахма тивет.

Канашлура икĕ хула хушшинчи таса марлăхăн полигонĕ тулса çитни, çĕнĕ полигон йăлари хытă каяша йышăнма хатĕр марри, «Химпром» пĕрлешӳ производствăри сиенлĕ хăш-пĕр япалана çаплипех Питтукасси çывăхĕнчи свалкăна турттарни çинчен «Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей» партин фракцийĕ пĕлтерчĕ. РФ либерал-демократсен партийĕн чăваш парламентĕнчи фракцийĕн ертӳçине эрех акцизĕсенчен тупăш ытларах илес тĕллевпе хаяр шĕвексене тултарма регионсене ирĕк парасси, Етĕрнери спирт заводне тепĕр хут чĕртсе тăратасси, управляющи компанисене туман ĕçе пурнăçланă пек кăтартса халăхран ăшăшăн, вĕри шывшăн улталаса пухнă укçана каялла тавăрасси кăсăклантарать.

– Пурин çинчен те çапла çирĕплетсе калама пирĕн ирĕк çук, – терĕ Михаил Игнатьев. – Эпир управляющи компанисен 10% тата камсем çапла хăтланнине пĕлсе тата тĕрĕслесе тăратпăр. Ултав çулĕ çине тăнисемпе çирĕп калаçатпăр. Енчен те «Химпром» сиенлĕ препаратсене ирĕк памасăр унта вăрттăн турттарать тăк – яваплăхран пăрăнаймĕ. Етĕрнери спирт завочĕ тепĕр хут ĕçлесе каяс шанăç пĕчĕк мар: «Росспиртпром» пĕрлешӳ ертӳлĕхĕпе ĕçлĕ калаçусем пыраççĕ.

Йăлана кĕнĕ тĕл пулура темиçе çул каялла Çĕмĕрле районĕнчи Мисчĕ поселокĕ çывăхĕнчи чукун çул çинчи цистернăсем çаврăнса ӳксе вĕсенчи химикатсем юхса тухса çĕре варалани, халĕ Чул хула чукун çул управленийĕн дирекцийĕ малтан панă сăмахне тытмасăр инкек сиенне сирессинчен пăрăнни çинчен те сăмах пулчĕ.

Çур енне куçрăмăр. Çĕр типсен çынсем сад юлташлăхĕсенчи хайсен лаптăкĕсене васкĕç. «Çул çӳрев хакне пĕчĕклетме май çук-ши?» – кăсăкланчĕ коммунистсен партийĕн фракцийĕн ертӳçи Дмитрий Евсеев. Вăлах вăрçă ачисен ыйтăвне çĕклерĕ, «Чăваш Республикин ветеранĕ» хисеплĕ ята тивĕçме стаж çулне кăштах та пулин чакарма сĕнчĕ. Вăлах Шупашкарти Г.Лебедев ячĕллĕ лицей шăпине уçăмлатма ыйтрĕ. Паллах, виçĕ ыйтăвĕ те укçа-тенкĕпе çыхăннă. Республика бюджетĕнче пĕрремĕш тĕллевпе пысăк сумма палăртса хăварман. Апла пулин те ыйту çивĕчленме кирлĕ мар. Общество транспорчĕшĕн ватă çынсем хăйсем тивĕçнĕ çăмăллăхпа туллин усă курĕç. «Ветеран» ят илмелли стаж вăхăтне те чакарĕç. Малтанлăха – 2 çул çурă чакĕ. Шел те, паян-ыран мар. Мĕншĕн тесен ку ыйту та укçа-тенкĕпе çыхăннă...

РФ Федераци Канашĕн членĕ Галина Николаева тăван республикăмăр ертӳлĕхĕ кал-кал ĕçлеме пултарнипе Мускавра та сум çĕнсе илнине тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ. Федераци Канашĕн спикерĕ Валентина Матвиенко чылай чухне чăвашсене ырă тĕслĕх вырăнне лартать. Галина Григорьевна Крымри референдум пĕлтерĕшĕ çинче те чарăнса тăчĕ. «Вăрçă ачисен» ыйтăвĕ пирки те хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ. «Чăваш парламентĕнчи фракцисем республикăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕшĕн пĕр шухăш-тĕллевпе, ĕмĕтпе ĕçлеççĕ. Çакă паха. Апла тăк эпир ӳсĕм çулĕпе утатпăр», – терĕ сенатор пурне те ырă сунса.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

### Сенатор йышăнĕ

Раççей Федерацийĕн Федераци Канашĕн Наука, вĕренӳ, культура тата информаци политикин комитечĕн членĕ Галина Николаева пуш уйăхĕн 20-мĕшĕнче Раççей Президенчĕн Шупашкарти йышăну пӳлĕмĕнче 13 сехетрен пуçласа 15 сехетчен республикăри çынсене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнать. Йышăну пӳлĕмĕн адресĕ: Шупашкар хули, Ленинград урамĕ, 36-мĕш çурт.

Çак номерсемпе шăнкăравласа малтанах çырăнмалла: /8352/ 62-22-33, 62-22-55.

### Тĕрĕслев иртет

Пуш уйăхĕн 19-мĕшĕнче Чăваш Енре централизациленĕ хыпарлавăн регионри системин тĕрĕслевĕ иртет. Вăл 10 сехетре пуçланать. Асăрхаттару сигналне урамри сиренăсемпе сасса вăйлатакан хатĕрсем, радио тата телекурав каналĕсем параççĕ. "Çынсен электросиренăсем сас панă вăхăтра пăлханса-хăраса ӳкмелле мар, ĕçе тата вĕренĕве малалла тăсмалла", – пĕлтерет Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕ.


**Реклама менеджерĕ кирлĕ**

**«Хыпар» Издательство çурчĕ реклама менеджерне ĕçе илет: Тел.: 56-00-67, 28-83-70.**





Паян уяр çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 4, каçхине 9 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 759 мм, сывлăшри нӳрĕк 84 процент.

**Кун тăршшĕ 11 сехет.**

Ыран улшăнса тăракан ăмăр çанталăк пулать, юр çукалать. Çил çурçĕртен çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 0, каçхине 7 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 764 мм, сывлăшри нӳрĕк 78 процент.

**Кун тăршшĕ 11 сехет те 4 минут.**

*Лару*

# Техника паркне çĕнетмеллех

***Правительство çуртĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе ЧР экономикине модернизацилес тата технологие аталантарас енĕпе ĕçлекен Канашĕн ларăвĕ иртрĕ. Кун йĕркине 3 ыйту кĕртнĕ. Çур аки çывхарнă май пĕрремĕшĕ – "Ку чухнехи условисенче ЧР агропромышленноç комплексĕн техникине модернизацилесси" – пĕлтерĕшлĕрех пулнăран ларăва пухăннисене чылайччен калаçтарчĕ. Михаил Васильевич рынок условийĕсем улшăнса пынине, алă вăйĕпе ĕç тухăçлăхне ӳстерме май çуккине палăртрĕ.***



Малтанхи ыйтупа ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов доклад турĕ.

– Ял хуçалăх производствинче машина-трактор паркĕ тĕп вырăн йышăнать. Ăна пысăк тухăçлă техникăпа пуянлатмасăр продукци калăпăшне те, пахалăхне те лайăхлатаймăпăр, – терĕ Сергей Владимирович.

Министр шухăша яракан цифрăсем илсе кăтартрĕ. Сухалакан-акакан çĕрĕ 100 гектар çине куçарса шутласан Чăваш Енри техника 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне 126 лаша вăйĕпе танлашнă. Çав вăхăтрах федерацин Атăлçи округĕпе – 131, Раççейĕпе – 147. Çĕр-шывăн вăтам кăтартăвĕнчен самаях юлни республикăри машина-трактор паркĕсем чăнласах ватăлса пынине çирĕплетеççĕ.

Ял хуçалăх министерстви уйсен лаптăкĕ вăтамран 60-70 гектарпа танлашнине шута илсе 130-300 лаша вăйĕллĕ тракторсем тата 6-12 метр сарлакăш акакан сеялкăсем туянма сĕнет. Республикăра ресурс перекетлекен хăватлă хурçă ут хальлĕхе – 105, пĕлтĕр ăна саккăр туяннă. Паллах, ку çителĕксĕр.

2013 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне ял хуçалăх таварĕ туса илекенсен паркĕнче – 3622 трактор, тырă выракан хир карапĕ – 980, выльăх апачĕ хатĕрлекен комбайн – 394. Çав вăхăтрах хурçă утсен – 60, комбайнсен 50 процентĕпе производствăра 10 çул ытла усă курнă. Хăш-пĕр хуçалăхра вара халĕ те 25-30 çул "стажлă" техникăпа хире тухаççĕ. Унашкаллисем çунтармалли-сĕрмелли материала нумай пĕтереççĕ, вĕçĕмрен юсаса нухрат сахал мар тăкакланать.

Хуçалăхсем майĕпен те пулсан çĕнĕ комбайн е трактор çулленех туянаççĕ. Çакна техника хăвачĕ ӳссе пыни лайăх çирĕплетет: 2010 çулта /100 га çине куçарса шутласа/ – 110 лаша вăйĕллĕ, 2014 çулта – 126. Парксем энерги перекетлекен техникăпа пуянланса пынăран топливо самаях упранать. 2000 çулта пĕр гектар лаптăка сухалама е акма /пĕрлехи ĕçе вăтамран шутласа палăртнă/ 9,5 литр топливо кирлĕ пулнă, 2013 çулта – 4,9 литр çеç.

Агрегат хир тăрăх пĕрре кайнипех ака-суха ĕçĕсене йăлт пурнăçласа çунтармалли-сĕрмелли материала сахалрах тăкакланăран çимĕç туса илес хăй хаклăх йӳнелет, тухăçпа пахалăх та ӳсет.

Экспертсем çирĕплетнĕ тăрăх – 2020 çул тĕлне мĕн пур тытăмри хуçалăхсенче пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене пĕтĕм лаптăкăн тăваттă пиллĕкмĕш пайĕнче /80%/ ресурс перекетлекен технологипе туса илĕç, çĕр улмине вара – 100 процентĕпех.

Министр çакна çирĕплетрĕ: органика каяшĕсенчен /тислĕк, çимĕçе тирпейленĕ хыççăн юлни, ытти те/ биогаз туса хатĕрлес, унпа усă курма тытăнас вăхăт та инçе мар. Хăш-пĕр районта çĕнĕлĕхе хăюллăнах çул паракан хуçалăхсем пур иккен. Сăмахран, "Аталану", "Намэко" /Канаш, Сĕнтĕрвăрри/ ял хуçалăх организацийĕсем.

Малашне тракторсем, автомашинăсем топливо-бензин вырăнне газпа усă курма тытăнĕç. Çакă хуçалăхсене усă парĕ, мĕншĕн тесен газ çунтаракан двигательлĕ хурçă ут е автомашина транспорт налукне сахалрах тӳлет.

АПК мĕнле аталанасси Чăваш Енре 2010 çулхи шăрăх хыççăнах йышăннă мелиораци программине епле пурнăçланинчен те нумай килет. Республикăра 46 хуçалăх 200 млн тенкĕлĕх шăвармалли техника туяннă. 2013 çулта 5000 гектар çинчи лаптăкра «çумăр çутарнă».

Малтанхи çулсенче патшалăх тăкакăн 30 процентне саплаштарнă. "Пĕлтĕр РФ Ял хуçалăх министерстви пирĕн программăна ырласа йышăнчĕ, тăкакăн саплаштару шайне 50% çити хăпартрĕ. Программа та, процент виçи те кăçал та вăйрах юлать", – пĕлтерчĕ Сергей Владимирович.

Ырă хыпар: 2014 çулта Шупашкарти промышленноç тракторĕсен завочĕ "Агромаш-3000", "Агромаш-4000" маркăллă комбайнсем кăларма тытăнать. Тĕллеве пурнăçлама Красноярскри "Енисей" хир карапĕсем кăларакан завода Шупашкара куçарни май панă.

– Техника хаклă. Çавăнпа ăна ял хуçалăх таварĕ туса илекенсен 30 процентĕ çеç хăйĕн шучĕпе туянать. Ыттине – кредитпа, – терĕ Сергей Павлов.

– Тĕрĕсех, – çирĕплетрĕ Раççей ял хуçалăх банкĕн Чăваш Енри филиалĕн ертӳçи Ирина Письменская. – Юлашки 5 çулта хресченсем 2 млрд ытла тенкĕлĕх 800-тен irттерсе кредит илчĕç. Федераци бюджетĕнчен техника туянма субсиди килме пăрахнăран ăна халĕ сахалрах илеççĕ. Кăçалхи икĕ уйăх çурăра – 50 млн тенкĕлĕх 22 кредит çеç.

Иккĕмĕш ыйтупа ЧР экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министрĕ Владимир Аврелькин 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче вăя кĕнĕ контракт тытăмĕ çинчен калакан федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн техника е технологи енчен кăткăс, çав вăхăтрах инновациллĕ те пысăк технологиллĕ таварсене туянасси çинчен каласа кăтартрĕ.

ЧР Министрсен Кабинечĕн 2012 çулхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн инновацин приоритетлă 61 тĕсне çирĕплетнĕ, вăл шутра нанотехнологи таварĕ те пур. "Продукци суйланă чухне хакĕ мар, пахалăхĕ, усă кураслăхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ", – палăртрĕ Владимир Александрович.

Юлашки ыйтăва федераци налук службин Чăваш Енри управлени ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Ольга Никинăпа экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин уçăмлатрĕç. Вĕсем республикăри темиçе организаци РФ бюджет тытăмне парăма кĕни çинчен пĕлтерчĕç.

2012 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне парăм 23,1 млн тенкĕ пулнă, 2013 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне вара 285,4 млн тенке çитнĕ. 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне те сахал мар – 197,6 млн тенкĕ. Уйрăмах "Трактор завочĕсем" концерна кĕрекен организацисен пысăк – 116 млн тенкĕ. "СУОР" ООО, çурт-йĕр тăвакан "СУОР" комбинат, "Текстильмаш" АУО, "Финанссем" управляющи компанийĕ те парăмлă. "Налукпа татăлма укça тупасси – организаци ертӳçисен тивĕçĕ", – терĕ Михаил Игнатьев.

Предприяти представителĕсем çывăх вăхăтра парăмсене тӳлесе татма шантарчĕç.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

# М.Игнатьев видеоконференци ирттернĕ

***Пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен администрацийĕсен пуçлăхĕсемпе видеоконференци ирттернĕ.***

2014 çулхи кăрлач-нарăс уйăхĕсенче пурăнмалли çурт-йĕр тунин тата халăхăн социаллă ушкăнĕсене хваттерсемпе тивĕçтермелли программăна пурнăçланин малтанхи пĕтĕмлетĕвĕпе Чăваш Республикин строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕ Олег Марков паллаштарнă. Вăл пĕлтернĕ тăрăх – 2014 çулхи пирвайхи икĕ уйăхра 24 пин тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр хута янă. Çулталăк тăршшĕнче 850 пин тăваткал метртан кая мар хута ярасшăн.

Федерацин çамрăк çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтермелли программине пурнăçлама республика бюджетĕнче 2014 çула 210 млн тенкĕ пăхса хăварнă, вырăнти бюджетсенче – 63 млн, федераци бюджетĕнчен – 126 млн тенкĕ. Çак укçа çамрăк 600 çемьене хваттерлĕ пулма пулăшĕ. Кăçал 95 ветерана патшалăх енчен пулăшма 100 млн тенкĕ ытла килмелле. Ветерансене, инвалидсене тата инвалид ачаллă çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерме 51 млн тенкĕ уйăрĕç. Нумай ачаллă 34 çемьене çак тĕллевпе 85,8 млн тенкĕ пама палăртнă. 2014 çулта тăлăх 253 ача хваттер илĕ.

Михаил Игнатьев муниципалитетсен пуçлăхĕсене халăхăн социаллă ушкăнĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерме уйăрнă бюджет укçи-тенкипе тивĕçлипе усă курма, подрядчиксене çуртсене вăхăтра хута яма чĕнсе каланă.

Чăваш Республикин вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен умне федерацин тата республикăн "Вĕренӳ çинчен" саккунĕсене пурнăçа кĕртнĕ чухне тухса тăма пултаракан ыйтусене татса памалли тĕллевсем лартнă. Çавăн пекех шкултан вĕренсе тухакансем валли аттестатсем туянас, 2014-2015 вĕренӳ çулĕнче хевтесĕр ачасене вĕрентес, вĕренекенсене тӳлевсĕр учебниксемпе тивĕçтерес ыйтусене сӳтсе явнă.

Видеоконференцире муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен администрацийĕсем çут çанталăк газĕшĕн парăмсене татмалли графиксене мĕнле пурнăçланине пăхса тухнă. 2014 çулхи пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ тĕлне муниципалитет йĕркеленĕвĕсен тата ăшăпа тивĕçтерекен организацисен администрацийĕсен усă курнă çут çанталăк газĕшĕн 638,5 млн тенкĕлĕх парăм пухăннă. Улатăр, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле районĕсенче, Улатăрпа Шупашкар хулисенче пысăк парăма кĕнĕ.

Михаил Игнатьев администрацисен пуçлăхĕсен килĕшӳсене пăхăнмаллине, усă курнă çут çанталăк газĕшĕн "Газпром межрегионгаз Шупашкар" ООО умĕнче парăма татас енĕпе витĕмлĕ мерăсем йышăнмаллине палăртнă.

■ **А.ЛЬВОВА**

# Республика Пуçлăхĕ саламланă

***Пуш уйăхĕн 14-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев "Чул хула Газпром трансгаз" тулли мар яваплă обществăн филиалне – Атăл леш енчи магистраль газ пăрăхĕсен лини производство управленине йĕркеленĕренпе 30 çул çитнине халалланă савăнăçлă уява хутшăннă.***

Хăйĕн сăмахĕнче республика Пуçлăхĕ Атăл леш енчи филиал ĕçченĕсене саламланă, предприятири лару-тăру лайăх, коллектив туслă та ĕçчен пулнине палăртнă. "Ĕç кăтартăвĕсемшĕн эпĕ сире пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватăп. Филиалăн тĕп пуянлăхĕ – эсир, кунта ĕçлекенсем", – тенĕ Михаил Игнатьев. Унччченхипе хальхине танлаштарсан предприятире пысăк уйрăмлăха асăрхатăн: производствăна çулленех çĕнетсе пыраççĕ, паян анлă технологиллĕ оборудовани ĕçлет, газа вăл Раççей Федерацийĕн регионĕсене çитерет.

Юбилей ячĕпе Михаил Игнатьев предприяти ĕçченĕсене наградăсем панă. Ĕçри çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн "Чул хула Газпром трансгаз" тулли мар яваплă обществăн филиалĕн – Атăл леш енчи магистраль газ пăрăхĕсен лини производство управленийĕн пуçлăхне Сергей Александрова Чăваш Республикин Хисеп грамотипе наградăланă. Автотранспорт цехĕн бульдозер машинистне Владимир Иванова, "Уренгой-Центр 1, Уренгой-Центр 2" газ пăрăхĕн компрессор станцийĕн инженерне Игорь Ласкеева Чăваш Республикин Пуçлăхĕ тав тунă, сехет парнеленĕ.

Культурăна аталантарма тӳпе хывнăшăн "Заволжский" клубăн халăх кĕввисен "Раштав" ансамблĕн коллективне те тав тунă.

■ **А.ВАСИЛЬЕВА**

*Экономика*

# Кăтартусем лайăхланнă

***2013 çула Чăваш Ен Правительстви ăнăçлă вĕçленĕ: республикăн патшалăх парăмне чакарас, бюджет йышăнас тата ăна пурнăçлас тĕллевпе пахалăха ӳстерес, харпăр хăй тупăшне пысăклатас тĕлĕшпе ӳсĕмсем пур.***

Налук тытăмне çĕнетессипе çыхăннă мероприятисем кăтартăва лайăхлатнă. 2013 çулта республикăн пĕрлештернĕ бюджечĕн тупăшĕ 43079,2 млн тенке çитнĕ, 2012 çулхинчен 2963,2 млн тенкĕ /7,4%/ ӳснĕ. Чăваш Ен бюджечĕ пĕлтĕр РФ Президенчĕн çу уйăхĕнчи указĕсемпе килĕшӳллĕн приоритетлă енсенчен йĕркеленнĕ.

Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ бюджечĕн харпăр хăй тупăшĕ 27921,9 млн тенкĕпе танлашнă, виçĕм çулхинчен 2346,3 млн тенкĕ /9,2%/ ӳснĕ /Раççейĕпе – 3,2%, федерацин Атăлçи округĕпе /ФАО/ – 5,1%/. Пирĕн республика ФАО субъекчĕсен хушшинче – 4-мĕш вырăнта.

ЧР пĕрлештернĕ бюджечĕн харпăр хăй тупăшĕн 90% – налуксем, ытти – налуксем мар тупăш. Налук тупăшĕсен тĕп пайĕ организацисемпе уйрăм çынсен усламĕн налукĕсенчен пуçтарăннă /61,2%/.

2013 çулта организацисен усламĕнчен кĕнĕ налук тупăшĕ 5234,4 млн тенке çитнĕ, виçĕм çулхинчен 0,4% сахалрах. Çакнашкал сулăм пур регионта та палăрать: Раççейĕпе – 13,1%, федерацин Атăлçи округĕнче 9,5% пĕчĕкрех. Чăваш Ен ФАО субъекчĕсен хушшинче – иккĕмĕш.

Уйрăм çынсен усламĕнчен кĕнĕ налук ӳснĕ. Вăл 10134,8 млн тенкĕпе /9,7%/ танлашать /Раççейĕпе – 10,5%, ФАОпа – 11,4%/.

Пĕлтĕр бюджет тивĕçтерӳлĕхне танлаштарма республика 7037,9 млн тенкĕ /30,3% ытларах/ дотаци илнĕ.

2013 çулта ЧР пĕрлештернĕ бюджечĕн тăкакĕ 44456,9 млн тенкĕпе /5,3% ӳсĕмлĕ/ танлашнă.

РФ Президенчĕ Владимир Путин çу уйăхĕнчи указĕсенче регионсене социаллă политикăпа сывлăх сыхлавне, ăслăлăхпа пĕлӳ парассине, ЖКХ тытăмне аталантармашкăн укça уйăрма чĕнсе каланăччĕ. Указсене пурнăçланă май ЧР пĕрлештернĕ бюджечĕн тăкакĕсем социаллă культура сферишĕн пысăкланнă, 31155,2 млн тенкĕпе /пĕтĕм тăкакăн 70,1%/ танлашнă, 2012 çулхинчен 4,5% ытларах. Социаллă тăкаксене ӳстернĕ май, Чăваш Республикин патшалăх парăмĕ 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне пĕлтĕрхи çав вăхăтпа танлаштарсан 381,6 млн тенкĕ /3,7%/ чакнă, 9827,1 млн тенкĕ пулнă, планланă шайран 935,4 млн тенкĕ /8,7%/ пĕчĕкрех.

Кăтартусене пĕтĕмлетнĕ май 2013 çул республикăшăн лайăх пулнине палăртмалла. Чăваш Ен Правительстви хăйĕн бюджет обязательствисене вăхăтра та пахалăхлă пурнăçланăран 2014 çулта та ăнăçлă старт илчĕ.

■ **В.СТЕПАНОВ**

*Специалист сĕнĕвĕ*

# Электрон майпа – меллĕрех

***Федерацин миграци служби Чăваш Енри управленийĕ халăха электрон мелĕпе патшалăх пулăшăвĕ парассине лайăхлатсах пыма тăрăшать. Çакă республикăри çынсен Раççей гражданинĕн паспортне илнĕ тата пурăннă çĕрте регистрацие тăнă, прописăкăран тухнă, патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕсен пĕрлехи порталĕпе усă курнă чухне вăхăта перекетлеме май панине тата меллине аван ăнланать.***

Пĕрлехи портал /www.gosuslugi.ru/ урлă заявлени çырма регистрациленмелле /анкетăна çырса тултармалла/ тата кирлĕ документсемпе УФМСăн территорири подразделенине каймалла. Документсемпе тата заявлени тĕслĕхĕпе Раççей ФМСĕн, Чăваш Енри УФМСĕн тата патшалăх пулăшăвĕсен сайчĕсенче тĕплĕ паллашма пулать.

Электрон мелĕпе патшалăх пулăшăвĕ илес текенĕн электрон мелĕпех çак документсене сĕнмелле:

- пурăннă вырăнта регистрациленесси е прописăкăран тухма ыйтса çырни;
- паспорт е çын кам пулнине ĕнентерекен урăх документ;
- çурта е пӳлĕме пурăнма ирĕк паракан документ /регистрациленнĕ чухне/;
- килнине е кайнине пĕлтерекен хут;
- килнин е кайнин статистика хучĕ;
- харпăрлăхçăн /е тара тытаканăн/ е вĕсемпе пĕрле пурăнакансен килĕшĕвĕ – электрон мелĕпе алă пусмалли правилăсемпе килĕшӳллĕн алă пусса.

Документсен тулли комплекчĕ пулмасан, çын хăй çинчен тулли пĕлтермесен, ыйтса çырнин интерактивлă формине сăпайсăр сăмахсемпе çырса тултарсан, çын ыйтса çырнине хăй пурăнман вырăнти органа ярса парсан заявление йышăнмаççĕ тата пăхса тухмаççĕ.

Енчен çын виçĕ кун хушшинче регистраци учечĕн органне кирлĕ документсемпе пымасан унăн ыйтăвĕпе ĕçлеме чарăнаççĕ, ун çинчен Пĕрлехи портал урлă пĕлтереççĕ.

Электрон мелĕпе патшалăх пулăшăвĕ илме хатĕрленекенĕн çак документсем пулмалла:

- паспорт пама е улăштарма ыйтса çырни;
- хальхи ӳсĕмри икĕ сăн ӳкерчĕк /калăпăшĕ 35х45 мм, хура-шурă е тĕрлĕ тĕслĕ, çара пуçăн/. Çыннăн сăнĕ сăн ӳкерчĕкĕн 70-80 процентне йышăнмалла.

Пĕрлехи портал урлă электрон мелĕпе усă куракан электрон документăн формипе сĕнекен сăн ӳкерчĕкĕсем пулмасан е вĕсем электрон формине тивĕçтермесен тата ыйтса çырнинче сведенисем çитмесен унăн ыйтса çырнине йышăнмаççĕ. Паспорт илекенĕн е ăна улăштараканăн миграци службин органне килнĕ чухне паспорт илме кирлĕ документсем – çурални çинчен калакан свидетельство, икĕ сăн ӳкерчĕк, çар учечĕн докуменчĕ, мăшăрланни е уйрăлни çинчен калакан свидетельство, 14 çул тултарман ачасен çурални çинчен калакан свидетельствисем, патшалăх пошлинин тӳлевĕн квитанцийĕ – хăйĕнпе пĕрле пулмалла.

■ **Эмилия АНДРЕЕВА, РФ УФМСĕн Чăваш Енри управленийĕн специалисчĕ**

**•Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ•**

## Пултаруллисене асăрхаççех

Республикăра пултаруллă ачасемпе çамрăксене хавхалантармалли май чылай. Сăмахран, професси, пултарулăх тĕлĕшĕнчен малалла ӳсме Чăваш Республикин Пуçлăхĕн çулленхи ятарлă стипендийĕ те нумай пулăшать. Кăçал культура тытăмĕнчи 78 çамрăк тата ачасен искусство шкулĕсенчи 5 вĕренекен çав çăмăллăхпа усă курĕç.

Çитĕнекен ăрăва тăван йăла-йĕркепе, культурăпа çывăхланма мĕн пулăшатьха? Фестивальсем, конкурссем. Культура çулталăкĕн ĕç планне хатĕрленĕ май çав пахалăхсене шута хума тăрăшнă та. Республикăри вĕренӳ учрежденийĕсенчен вырăнти, регионти тата Пĕтĕм Раççейри пултарулăх мероприятийĕсене йĕркелеме ыйтса 50 ытла заявка килнĕ. Çавсенчен 30 ытларахăшне плана кĕртнĕ. Ачасем валли, сăмахран, халăх юррисене кăмăллакансен "Сентти" конкурсĕ, ӳнер пултарулăхĕн "Черчен чечек" фестивалĕ, сусăррисен декорацие хушма искусство енĕпе йĕркелекен конкурсĕ тата ытти те.

Тĕп тĕллевсенчен пĕри – пултаруллă ачасене тупса палăртасси, вĕсене малалла аталанма пулăшасси. Тĕслĕхрен, çу уйăхĕнче палăртнă "Чăваш Енĕн çамрăк таланчĕсем" фестивале, вăл Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче пулĕ, Пĕтĕм тĕнчери, Раççейри, регионсен хушшинчи, республикăри конкурссемпе фестивальсен лауреачĕсем /ачасен музыка, искусство шкулĕсенче вĕренекенĕсем/, ЧР Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнисем хутшăнĕç. "Чăваш Енĕн пултаруллă ачисем" республика фестивалĕн пĕтĕмлетĕвне Чăваш патшалăх ӳнер музейне пуçтарăнĕç.

## Çурхи кунсем çитсен...

ЧР тава тивĕçлĕ артистки Людмила Яковлева пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче хăйĕн пултарулăх каçне ирттерчĕ.



Илĕртӳллĕ çак пике çĕнĕ кашни сезона ăсталăх енчен тата та уçăлса пынипе кĕтсе илет. Сцена çине профессионал юрăç пек тухнăранпа вара шăпах 20 çул çитрĕ.

Шупашкарти музыка училищинче, Хусан консерваторийĕнче пĕлӳ илнĕ вăл. Çавăнтанпа пурçăн пек çемçе сопрано сассипе Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн сцени çине тухать. Солистка тĕрлĕ партире – Марфа /"Царская невеста"/, Джильда /"Риголетто"/, Татьяна /"Евгений Онегин"/, Нарспи /"Нарспи"/, Микаэла /"Кармен"/, Ксения /"Борис Годунов"/, Теодора /"Мистер Икс"/ тата ытти те – палăрнă.

## «Раççейĕн чаплă ывăлĕсем»




Тĕп хулари "Радуга" культурăпа кану центрĕнче "Раççейĕн чаплă ывăлĕсем – Сергий Радонежский" проект пурнăçа кĕме пуçланă. Ку – "Раççейĕн чаплă ывăлĕсем" ярăмри культурăпа вĕренӳ проекчĕн улттăмĕш тапхăрĕ.

Культура çулталăкĕнче Раççей халăхĕ Сергей Радонежский çуралнăранпа 700 çул çитнине паллă тăвĕ. Унăн ăсхакăлпа кăмăл-сипет сумĕ çĕр-шывăн чаплă вăйĕсене пĕр тĕвве пуçтарма май панă, пилĕпе Мускав кнеçĕ Дмитрий ертсе пыракан ушкăн тутар-монголсемпе паттăррăн çапăçнă, 1380 çулта Куликов уйĕнче çĕнтернĕ.

Проекта хатĕрлеме тĕрлĕ коллекци материалĕсемпе усă курнă.

Центр ĕçченĕсем тĕп хулари тата республикăри шкул ачисемпе студентсем валли вун-вун экскурси ирттернĕ. Раççейĕн чаплă çыннисемпе – Михаил Лермонтовпа, Михаил Кутузовпа, Кузьма Мининпа, Дмитрий Пожарскипе, Романовсен династийĕпе, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин паттăрĕсемпе тата вырăс искусствин классикĕсемпе – паллаштарнă та ĕнтĕ.

## «Шевле» – ветерансен çуртĕнче



Элĕкри ачасен искусство шкулĕнчи "Шевле" фольклор ансамблĕ /ертӳçи А.М.Михайлова, концертмейстерĕ В.И.Терентьев/ нумаях пулмасть ветерансен çуртне çитсе килнĕ. Культура çулталăкĕнче çамрăк артистсем аслă ăрăва хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарма тĕв тытнă. Вĕсем чăваш /"Чĕрес чĕрес сарă çу" ярăм/ тата вырăс /"Я гнала гусей домой"/ халăх юррисене шăрантарнă, ташăсемпе савăнтарнă, унсăр пуçне совет кинофильмĕсенчи чуна çĕклекен юрăсене те янраттарнă. Ватă çынсем ачасен пултарулăхĕпе кăмăллă юлнă, вĕсене алă çупса хавхалантарнă, хăнана татах чĕннĕ.

## Вулавăшсем пушă пулмĕç



Елчĕк районĕнчи вулавăш ĕçченĕсем Культура çулталăкĕнче чылай ĕç палăртнă. Кăçал вĕсем яланхи пек литература, музыка, живопиç ыйтăвĕсемпе çеç мар, хутшăну, ĕç культури пирки те сахал мар сăмах хускатĕç. Паян шăпах çакă питĕ пĕлтерĕшлĕ те. Ентешĕсен – Раççей Федерацийĕн, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсен, библиотека ĕçĕн ветеранĕсен – ят-сумне халăхра çĕклес тĕлĕшпе те пултарулăха кăтартасшăн.

Республикăра муниципалитет культура учрежденийĕсен тата унта ĕçлекенсен хушшинче "Манăн культура учрежденийĕ: истори тата хальхи вăхăт" ятпа конкурс ирттересси пирки пĕлтернĕ. Унта хутшăнса пурнăçламалли ыйтусене сӳтсе явнă та районти вулавăш ĕçченĕсем пĕрлехи семинарта.

Семинарта çавăн пекех республика шайĕнчи "Чăваш Ен литератури: 2012 çулта чи нумай вуланнă кĕнеке" конкурс-акципе çыхăннă тата ытти ыйтăва та сӳтсе явнă.

**Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ.**

•Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ•



Хушма кăларăм

# Тăван ен

Пултарулăх

## Алă çупнă самантра кăмăл çĕкленет

*Анатри Кĕлешкасси ялĕ çумĕнче Хум шывĕ юхса иртет. Ку тăрăха турă хăех пилленĕ тейĕн. Кунта пурăнакансен чун-чĕрине çутă та савăнăçлă туйăмсем иленеççĕ.*

«Пирĕн патăмăрта пĕр хутчен пулса курнă çын та эпир атте-анне çĕрне мĕнлерех юратнине çийĕнчех туйса илĕ, – тет мĕн ачаранах çакăнта çарран чупса ӳснĕ Николай Николаев, ял-йышри пек каласан – икĕ хут Микулай. – Манăн кунта пурте хаклă: пĕр чарăнми малалла чупакан юхан шыв та, унăн тĕпĕнче йăлтăртатса выртакан вак чулсем те, шапа хуранĕсем те... Унччен шыв кӳс кĕски пекех тасаччĕ. Ача чухне çыран хĕрринчен хăпма та пĕлмен темелле. Шыв пĕр тикĕссĕн юхнине сăнаттăм, кĕвĕ çепĕçлĕхĕн вăрттăнлăхĕ ăçтан тухнине пĕлме тăрăшаттăм. Анчах кăлăхах, Хум шывĕ çийĕн чупакан хушка хумсем самантрах улшăнса тăратчĕç, çавна май вĕсен каларакан кĕвĕ çемми те çĕнĕлле илтĕнме тытăнатчĕ. Ирĕксĕрех шухăша путаттăм. Хумсен кĕввине саракании юхан шыв-ши е çут çанталăкăн куçа курăнман асамлă кĕслин çинçе хĕлĕсем-ши?»

Микулай, Тури Кĕлешкассинче çуралса пĕчĕклех Анатри Кĕлешкассинче пурăнма тытăннăскер, сăвапла шутланакан Хум хĕррине тăтăшах кайса çӳреме, хумсен кĕвĕллĕ сассине тарăн шухăша кайса тăнлама юратнă. Чулсен хушшине шăнкăртатса юхакан шыв кĕвĕлĕхĕнче вăл савăк çу кунĕсем иртнĕ хыççăн çуралакан салху çемĕсене те, хĕле хăваласа яма вăй-хăват çитерекен çуркуннен çĕкленӳллĕ янравлăхне те илтсе туйса тăнă.

Ара, Хум паян та, хăйне талккишпех шурă пĕркенчĕк витсе хунă пулсан та, пăр айĕнче хăйĕн хӳхĕм юррине юрлать... Акă мĕншĕн Николай Николаевăн чун-чĕри мĕн ачаранах юрă-кĕвĕпе туслă. Вăл, хăй ас тăвасса, кирек хăçан та юрланă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче, Тури Кĕлешкасси пуçламăш шкулĕнче вĕреннĕ тапхăрта, ял-йыш умне пуçласа тухнă. Çавăн чухне паллă кунсен, уявсен ячĕпе хатĕрленĕ концертсене хутшăннă. Нумай сасă хушшинче çухалса кайман пĕчĕк юрăç, кăкăрĕнчен çĕкленсе тухакан килĕшӳллĕ янравĕпе вăл пурне те тĕлĕнтернĕ.

Çут çанталăк панă ăсталăх, ыттисенчен уйрăлса тăракан сасă пурри ăна шкулти пултарулăх ушкăнĕнчи тантăшĕсен хушшинче чи мала кăларнă та. Ытахальтен «шăпчăк» тесе чĕннĕ мар ĕнтĕ ăна вĕрентекенсем. Вăл юрланă чухне хăйне сцена çинче артист пек тытса юрă содержанийĕне килĕшӳллĕн сăн-питне улăштарма пултарнă. Кунпа пĕрлех шкул ачи ăста купăсçă пулнă, кирек мĕнле кĕвве те çăмăллăнах шыраса тупнă.

Анчах Николай Николаевăн музыка училищине мар, Вăрнар районĕнчи Калининăри профессии училищине кайса кĕнĕ, электромонтер ĕçне алла илнĕ. Кунти хорта юрланă. Специальноç илсен тăван республикăн тĕп хулинчи механизациленĕ 50-мĕш колоннăна вырнаçнă. Электромонтер хăйĕн пекех çамрăк та маттур каччăсемпе пĕрле районсене тухса çӳренĕ, пысăк вольтлă электричество линийĕсене карнă. Мĕнлерех ĕçленĕ-ха вĕсем? Ыйтăва çапла хуравларĕ: «Канма та пĕлмен. Юрă вара пирĕн чи шанчăклă та çывăх тус пулнă. Ĕç хыççăн çынсене савăнтарнă. Çавна май ялсене çутă кĕртме хутшăннă Патăрьел, Шăмăршă, Елчĕк, Йĕпреç районĕсен ертӳлĕхĕсенчен тав сăмахĕ сахал мар илтнĕ».

Юрлас ăсталăхĕ тивĕçлĕ шайра пулни ăна Совет Çарĕнче пулнă чухне те пулăшнă. Вĕсен çар чаçĕ Çурçĕр Казахстанра тăнă. Салтаксем стройпа утнă чухне юрласа яракане кам пулнă тетĕр? Паллах, Николай Николаев! Вăл театрта та ĕçлеме пултарнă, анчах пурнăçра урăх çул-йĕр суйласа илнĕ. Салтак тивĕçне чыслăн пурнăçланă хыççăн тăван тăрăха таврăннă та кăшт вăхăтран Йĕпреçри «Ял хуçалăх техники» пĕрлешӳне хăйĕн специальноçĕпе вырнаçнă. Ĕмĕт-тĕллевĕ çитнĕ темелле.

Коллектива – пĕр-пĕрне хисеплекен, ăнланакан çынсем. Анчах Николай Николаева темĕн çитмест пек, чунĕ таçталла туртăнать пек. Çакăн пек хыпăнса çуннă вăхăтра çамрăкăн тунсăхне сирме пулăшакан çул-йĕр уçăлнă иккен. Тăван ялĕнчи культура çуртĕнче ĕçлеме тытăнсан кăмăлĕ савăкланса кайнă Николай Александровичăн. Кĕске хушăрах культурăн чăн вучахĕ пулса тăнă ку çурт. Директор тăрăшнипе, çине тăнипе арçынсемпе хĕрарăмсен ансамблĕсем, драма кружокĕ йĕркеленнĕ. Вырăнти артистсем концерт, спектакль час-часах лартнă. Пур çĕре те ĕлкĕрнĕ пуçлăх, талантĕпе савăнăç-киленӳ кӳнĕ ял-йыша. Вăл ертсе пыракан пултарулăх ушкăнĕ районти конкурссемпе фестивальсен лауреачĕ тата çĕнтерӳçи пулнине те Николай Александровичăн тӳпи сумлă та курăмлă. Тĕп ĕçрен пĕр шит те уйрăлмасăр директор Чăваш Республикинчи культурăпа çут ĕç училищинчен хор дирижерĕн специальноçне илсе тухнă.

«Эпĕ çынсен искусство енне туртăннине тата çав юратăва хăш хывма тăрăшнине куратăп та – калама çук хĕпĕртетĕп, – пытараймасть хăйĕн савăнăçне ветеран. – Хам мĕн паян кунччен халăх юрри-такмакне, ташă çеммисене кăмăллатăп. Çынсем хыттăн алă çупса саламланă самантра тӳпене кайăк пек çĕкленме хатĕр. Çынна тарăн шухăша яракан, хумхану-пăшăрханăва сирме пулăшакан юрăсем мана уйрăмах çывăх...»

Николай Александрович тахçанах тивĕçлĕ канура ĕнтĕ, анчах килте пуçа усса лармасть. Савнă мăшăрĕ, тĕрĕ-эреше ăста, ĕçчен алăллă Галина Федотовна çур сăмахранах ăнланать ăна, тăтăшах пулăшса пыма тăрăшать. Кил хуçине паян та юрă-кĕвĕрен уйăрма çук, вăл район центрĕнчи Геннадий Степанов ячĕллĕ ветерансен хорĕн репетицийĕсене çӳреме те, Чăваш Тимешри «Эреветт» фольклор ушкăнĕнче пĕрле юрлама та вăхăт тупать. «Эреветт» çулталăкра икĕ хут лауреат пулчĕ: малтан Чăваш наци радиовĕн, унтан Чĕмпĕрте иртнĕ регионсен фестивалĕнче çĕнтерчĕ. Çав çитĕнӳсем, паллах, Николай Николаев хутшăнмасăр пулман.

Юлашки вăхăтра Николай Николаев хăй пекех юрра-кĕвве кăмăллакан, вырăнти авторсен сăввисемпе сахал мар юрă çырнă, Тури Кĕлешкассинчи Ананий Макаровпа уйрăмах туслă çыхăнура. «Аннесем çинчен çырнă юрă питĕ нумай, çав хушăрах аттесене манса хăваратпăр. Эпир Ананий Макаровпа иксĕмĕр çав «йăнăша» тӳрлетес терĕмĕр. Пирĕн хайлав начар мар пулса тухрĕ. Куракансем ăна лайăх хак парса йышăнчĕç», – савăк туйăмĕсене туллин уçса калаçать ырă ятпа чыс-сума тивĕçнĕ юрăç.

Кĕлешкасси шăпчăкĕ сцена çинчен хăйĕн ентешĕсене ӳлĕмрен те савăнăç, хавхалану кӳресси шансах тăратпăр.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

Çивĕч ыйту

## Фермерсен тӳпи пысăк та...

***Вун-вун çул каялла ялсенчи пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем хальхи пек йывăрлăха тӳсмен. Пĕлмен те вĕсем вăл мĕн иккенне. Чăваш Енри хресчен-фермер хуçалăхĕсемпе ял хуçалăх кооперативĕсен ассоциацийĕн ертӳçи Ильдар Чемеров каланă тăрăх – ун чухне колхозсемпе совхозсене çĕр-шыв хыснинчен 18% таранах дотаци панă. Çавăнпа пур хуçалăх та вăй илсе, аталанса пынă: хăйсен шучĕпе шкул, клуб, правлени, ферма çурчĕсем, ытти объект тунă. Вĕсемпе çынсем халĕ те анлă усă кураççĕ. «Çав çулсенче туса юлман пулсан паян вăй çитерес çукчĕ», – тесе иртнĕ вăхăта ырăпа аса илеççĕ, ертӳçĕсене тав тăваççĕ.***

Совет Союзĕ аркансан пулăшу вун-вун хут чакрĕ, çавăнпа ял хуçалăх пĕрлешĕвĕсем пĕрин хыççăн тепри саланчĕç. Колхоз-совхоз вырăнне çĕнĕ тытăм – фермер юхăмĕ – çуралчĕ. Уйрăм çын хуçалăхĕ аталанма тытăнчĕ. Малтанлăха вĕсене çăмăл марччĕ. Çĕр памасăр тарăхтаратчĕç, парсан та лаптăка япăх вырăнта уйăратчĕç. Техникăсăр тертленекенсем лаша усрама ирĕк парсан лаштах сывласа ячĕç. Малтанхи вăхăтра ут йышĕ республикăра чăнласах пысăкчĕ.

2006 çулта «АПК аталанăвĕ» приоритетлă наци проекчĕ çула тухсан çĕр ĕçченне тĕрлĕ йышши кредит пама тытăнчĕç. Фермерсем те, ахаль çынсем те çĕнĕ, çав вăхăтрах пĕчĕкрех хăватлă техника илме пуçларĕç. Ял халăхне вара лаша кирлех пулмарĕ. Ăна кунĕн-çĕрĕн пăхмалла: çитермелле, шăвармалла... Тракторпа кирлĕ чухне кăна усă куратăн, апат та ыйтмасть.

Чăвашстат пĕлтернĕ тăрăх – республикăра ут йышĕ çулсерен чакать. Мĕн пур тытăмри хуçалăхра 2009 çулта – 8064, 2010 ç. – 7709, 2011 ç. – 6879, 2013 çулта 6200 лаша пулнă. Чи нумайăйи – Патăрьел, сахалли – Çĕрпӳ районĕсенче. ХФХсемпе уйрăм çын хуçалăхĕсенче кăтарту çапларах: 2009 ç. – 285, 2010ç. – 258, 2013 ç. – 200 ут. Улатăрпа Пăрачкав, Красноармейскипе Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпӳпе Шупашкар районĕсенчи фермерсемпе уйрăм çынсем янавар вуçех усрамаççĕ.

Канаш районĕнчи чи пысăк ялсенчен пĕринче – 713 киллĕ Уçырмара – виçĕ лаша çеç пулни тĕлĕнтерчĕ. «Çав вăхăтрах мотоблоксен шучĕ те çук», – тенĕччĕ мана ял тăрăхĕн администрацийĕн пуçлăхĕ Валерий Иванов. Анчах çу кунĕсенче мотоблоксене ĕçлеттерекен çук. Вăй питти арçынсем хуласене шапаша тухса каяççĕ. Хĕрарăмсем усă курма пĕлмеççĕ. Çĕр улмине ирĕксĕрех пĕчĕк суха пуçа вĕренпе туртса çыраççĕ.

Вĕр çĕнĕ те хăватлăрах моторлă тракторсем туянма вăй çитерекен фермерсем пурри савăнтарать. Хăшĕ-пĕри вара саланнă хуçалăхсен шутран кăларнă техникине илме хевте çитернĕ.

Кивĕ сăхмана сапласа çитереймĕн теççĕ. Пĕр çĕрте пи-тĕретĕн çеç, тепĕр тĕлте шăтса та тухать. Кивĕ трактор та çавах. Юсаса тăкак куратăн кăна. Çĕнĕрен туяннине, паллах, нимĕн те çитмест. Пĕлтĕр республикăра шута илнĕ 1647 ХФХран 80 ытла проценчĕ Раççей ял хуçалăх банкĕпе тачă çыхăну тытать.

Республикăри пĕчĕк хуçалăхсене патшалăх пулăшăвĕ парасси çулсерен ӳсет. 2006-2011 çулсенче «АПК аталанăвĕ» наци проектне тата «2008-2012 çулсенче ял хуçалăхне аталантарасси тата ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр таварĕн тата апат-çимĕç рынокне йĕркелесе тăрасси» патшалăх программисене пурнăçа кĕртнĕ май ХФХсене, уйрăм çын хуçалăхĕсене 11,9 млрд тенкĕлĕх кредит панă.

Чăваш Енре инфратытăма лайăх аталантарнине тĕпе хурса РФ Правительстви кăçал пирĕн республикăри пĕчĕк хуçалăхсене пулăшмашкăн 540 млн тенкĕ уйăрас ыйтăва пăхса тухнă. Ку укçан пĕр пайĕпе чи малтанах çур аки ирттерме усă курĕç.

Хăш-пĕр районсенчи ХФХсен, уйрăм çын хуçалăхĕсен тӳпи ЧР агропромышленноç комплексĕ туса илекен тырпулпа пахча çимĕç калăпăшĕнче тĕлĕнмелле пысăк. Патăрьел, Елчĕк районĕсенче севок суханăн 70-80 процентне пĕчĕк хуçалăхсем туса илеççĕ. Элĕк енче çĕр улмине – 80-90% таранах.

ХФХсем республикăн кăнтăр енче йышлă. Ку тăрăхри районсенче фермерсен ассоциацине йĕркеленĕ. Хресченсем вăхăтран-вăхăт пухăнса хăйсене канăç паман ыйтусене сӳтсе яваççĕ. Пухăва çӳременнисем тивĕçлĕ информаци илеймеççĕ. Çакă вĕсене аталанура ура хурать.

Пĕчĕк хуçалăхсем тирпейлекен отрасле çул пани савăнтарать. Тĕслĕхрен, Василий Семенов ХФХ /Куславкка районĕ/ купăста тăварласа йӳçĕтсе Чăваш Ен тулашĕнче те услам тăвать. «Таябинка» агрофирма /Красноармейски районĕ, директорĕ – Александр Афанасьев/ çĕр улмине лайăх тасатса республикăн тĕп хулинче чылай пысăк хакпа сутать.

Фермерсен тӳпи пысăккине палăртрăмăр, анчах пĕлӳ шайĕпе мухтанмалли çук пулĕ. Ятарласа ял хуçалăх пĕлĕвне пурте илмен. Тĕрлĕ професси çыннисем вĕсен хушшинче: водитель, педагог, строитель... Манăн шухăшăмпа – республикăри аслă тата ятарлă вăтам пĕлӳ паракан шкулсенче вĕсене хатĕрлекен факультет е уйрăм пулмаллах.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

Кур та савăн

## Тĕлĕнтермĕш ăста

***Йӳçкасси ялĕнчи Станислав Владимирова кам пĕлмест? Таврари паллă ăста пирки ыррине нумай илтнĕ пулин те хăйĕнпе халĕччен те курса калаçманччĕ-ха. Станислав Германовича патшалăх технадзорĕн районти инспекцийĕн пуçлăхĕпе Юрий Ивановпа килĕнче тĕл пултăмăр.***

Кил хуçи арăмĕ Зоя Гурьевна пире ырă сунса кĕтсе илчĕ. Кĕçех кирлĕ çын хăй те курăнчĕ. Унпа калаçма селĕм, ыйтусене кĕскен те татăклăн хуравлать. Хамăра та çăмăл туятпăр.

Станислав Германович 64 çулта. Ĕç стажĕн ытларах пайне «Красноармейский» пĕрлешӳллĕ хуçалăхпа çыхăнтарнă. Хуçалăх салансан пĕр тапхăр «Мир» кооперативра вăй хунă. Каярахпа ĕççĕр юлнă, анчах вăхăта кĕрĕк арки йăваласа ирттермен – тивĕçлĕ канăва тухиччене Мускава çӳренĕ.

– Иртнĕ çул тухтăрсем патĕнче сывлăха тĕрĕслеттертĕм. Ытларах çуран çӳреме сĕнчĕç. Халĕ ир-каç пилĕкшер çухрăм утатăп. Эрех-сăра таврашне сыпмастăп, пирус та туртмастăп текех, – пĕлтерчĕ кил хуçи кăмăллăн.

Мăшăрĕ хамăр енчисемех, Чумаш ялĕнчен. Крентейкассинчи сĕт-çу ферминче доярккăра, техник-осеменаторта, каярахпа Именкассинчи комбикорм заводĕнче вăй хунă, халĕ вăл та – пенсире.

Вĕсем 3 ывăлпа 2 хĕр çитĕнтернĕ. Шел, ирсĕр чунлă çынсем Мускаври Женьăн пурнăçне татнă. Саша хăйĕн çемйипе Крентейкассинче тĕпленнĕ, ашшĕ пекех электрике вĕреннĕ, «КЕТРА» заводра операторта вăй хурать. Эдикăн та хăйĕн кил-йышĕ, çĕршывăн тĕп хулине ĕçлеме çӳрет. Хĕрĕ Татьяна Шупашкарта пурăнать, вăл – çĕвĕç. Екатерина вара ялтах, пĕчĕк ача пăхать. Владимировсен 8 мăнук, вĕсемпе тивĕçлĕ канурисем куç тулли савăнаççĕ.

– Техникăпа ачаранах кăсăкланатăп, çакă аннерен Мария Владимировнăран куçрĕ пулмалла. Вăл кустăрмаллă трактор çӳрететчĕ, – аса илчĕ Станислав Германович.



• *Станислав Владимиров /сулахайри/ Юрий Иванова хăй пухнă автомашинăпа паллаштарать.*

Ялта вăл тума пĕлмен, тытса курман ĕç çук пулĕ. «Кашнин хăйĕн кĕвви тата меслечĕ. Пĕр тытăнсан, чунчĕререн киленнĕрен, ниепле те пăрахаймастăп», – тет чăнласах ылтăн алăллă ăста. Пиллĕкмĕш класра чухнех, çу кунĕсенче, çитĕннисемпе пĕрле платникре çӳренĕ. Алли çыпăçуллă пулнине аслисем асăрханă, çавăнпа ăна хăйсенчен уйăрман.

Мĕнле кăна ăсталăха хăнăхман-ши вăл? Çуртсене тул енчен хăмапа витнĕ. Хăйсем пурăнакан пӳртпе ытти хуралтăна та мăшăрĕпе иккĕшех тунă.

– Салтакран килсенех инвалидсен коляска машинин двигательне вырнаçтарса виçĕ урапаллă трактор, кабинăллă аэроçуна майлаштартăм, – тĕлĕнтерет Станислав Владимиров. Çав çулсенчен пуçласа «Моделист-конструктор» журнал çырăнса илет. «Вăл малтанах питĕ пулăшрĕ, чертежсене халĕ пĕтĕмпех пуçра тытатăп», – шӳтленĕн калаçать «Кулибин».

Килĕнче вăл виçĕ фазăллă электрооборудование ĕçлеттерет, универсал станок, шурă çăнăх авăртмалли икĕ арман, темиçе трактор, виçĕ касăллă плуг, утă пуçтармалли кĕрепле, сварка ĕçĕсем тума трансформатор, шпунтпа закрой кăлармалли станок, утă-улăм вĕтетмелли агрегат тата ыттине те ăсталанă.

– Алă пырать пулсан, пĕр тытăнсан тĕллеве пурнăçлатăнах. Ĕçе вĕçне çитеретĕнех. Пĕлтĕр хăма саваламалли станок майлаштартăм. Кăçал косилка туса хатĕрлесшĕн, – çунатланать Станислав Владимиров.

Чăваш хăй куçĕпе курмасăр, аллипе тытса пăхмасăр ĕненмест тени тĕрĕсех ĕнтĕ. Пирĕн те ăста ĕçĕсемпе çывăхрах паллашас килчĕ. Гаражпа столяр цехне те кĕрсе куртăмăр. Кашни япала хăйĕн вырăнĕнче, алă айĕнче.

Владимировсем пахчари, анкартинчи мĕн пур ĕçе /çĕр улми лартнисĕр пуçне/ пĕтĕмпех кил хуçи ăсталанă техникăпа тăваççĕ. Ял çыннисене те пулăшма ӳркенмеççĕ.

Вĕсен садĕнче улма-çырла йывăççи темĕн чухлех. Кил хуçи пурне те тенĕ пекех вăрăран акса ӳстернĕ.

Кустăрмаллă тракторне кăтартса районти «Кулибин-2013» конкурсра диплома тивĕçнĕ. Станислав Германович Трак ен çыннисене хăйĕн çĕнĕ ĕçĕпе кăçал та тĕлĕнтересшĕн. Мĕнпе тетĕр-и? Хальлĕхе ку – вăрттăнлăх.

■ **Виктор ДАНИЛОВ.**

Красноармейски районĕ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

## Çулне кура мар вашават

***80 çул урлă каçнă Владимир Краснов, Хуракасси ял канашне 15 çул ертсе пынăскер, паян та тăван Услă Пукашра аванах пурăнать.***

– 1975-1990 çулсенче мĕн кăна тӳсмен, курман пулĕ эпĕ, – аса илӳ çăмхине сӳтет Владимир Степанович. – Пур яла та шыв кĕртме мĕн тери йывăрччĕ. Паян тимĕр-капрон пăрăх темĕн тĕрли те тĕл пулать. Укçа çеç пултăр.

«Краснов колонкисем». Çапла ят панă куллен шыв ăсма тухакансем урамсем тăрăх вырнаçтарнă колонкăсене. Тимĕр пăрăха республика тĕп хулинче ШĔМ тытăмĕнче хĕсметре тăнă А.Максимов тупма пулăшнăччĕ. Унăн тĕрлĕ предприяти пуçлăхĕсен хушшинче тус-пĕлĕш нумайччĕ çав.

Хуçалăхăн тĕп ялĕнчи икĕ хутлă çуртсем патне пыракан ăшă трассине чĕркеме кĕленче вата кирлĕччĕ. Ăна та вăлах тупса панăччĕ. «Эльбарусовский» совхозăн тĕп инженерĕ Виталий Хмелев виçĕ автомашинăпа турттарса килнĕччĕ.

Елена Ириткова, Лима Шиверева, Александра Казакова хăмлаçăсем хастар депутатсем те пулнă. Ферма ертӳçи Петр Мадянов, Элменкассинчи Михаил Орлов, Хуракассинчи Иван Иванов... Вĕсемсĕр пĕр пуху та иртмен. Яланах çивĕч калаçатчĕç. Петр Мадянов вара пуçлăхсене сăвăлласах пĕçерккĕ паратчĕ. «Шел, паян вĕсене çитекен хастарсем çук, – тет Владимир Краснов. – Манăн пулăшуçă Николай Иритков шоферччĕ. Саппасри çар морякĕ вăл çулсенче милицин штатра тăман инспекторĕ пулнă. Ӳсĕр-пӳсĕре лăплантарма хăраман, ялсенче çирĕп йĕрке тунă».

Владимир Степановичăн ачалăхĕ нушаллă иртнĕ. Пĕр ĕçрен те юлман вăл: ут пăхнă, суха тунă... Ашшĕ Çтаппан пичче фашистсен тыткăнĕнче асап тӳснĕ. Вăрçăран таврăнсан хуçалăхра аслă конюхра ĕçленĕ. Ывăлĕ ăна сахал мар пулăшнă. Вăта Пукашри мунчала эртелĕн футбол командин чысне те хӳтĕленĕ вăл. Çарта спорт ротине лекнĕ. Сержант званине илнĕ, взвод командирĕн пулăшуçине çитнĕ, округри çар хаçачĕн корреспонденчĕ те шутланнă. Таврăнсан Çĕньял шкулĕнче 6 çул завхозра вăй хурать. Хастарлăхне асăрхаса уй-хир бригадине куçараççĕ. 1975 çулта КПСС райкомĕ Хуракасси ял канашне ертсе пыма сĕнет. Çав çулсенче Вăта Пукашра пуçламăш шкул тепĕр хут ĕçлеме тытăнать. Хуракассинче пурăнмалли 2 хутлă çуртсем, çĕвĕ цехĕ, автовокзал, почта, столовăй, çăм тапакан, урапа-çуна тăвакан цехсем уçăлаççĕ. Стадион хута каять.

Ветеран килте ахаль лармасть. Çулне кура мар вашават вăл. Хаçат-журнал нумай çырăнса илет. Сĕт сутма çӳрет. Мăнукĕсемпе, вĕсен ачисемпе йăпанать. Вĕсене выльăх-чĕрлĕх, чăх-чĕп, кролик пăхма хăнăхтарать. Пĕр парта хушшинче ларнă Петĕр Вашават поэт сăввисене вуласа киленет.

■ **А.АНИШОВ**

## Лаптăксем усăсăр выртмĕç

Элĕк районĕнчи Тени ял тăрăхĕнче çĕр пайĕсене харпăрлăха куçарас тĕлĕшпе «пăр тапраннă». 727 пайçăран 329-шĕ /45,25%/ лаптăксене харпăрлăха куçарнă, 60-шĕ /15%/ федерацин кадастр, картографи патшалăх службин Чăваш Енри управленине ыйтса çырса пайсене каялла панă.

Пушă выртакан тата тухăçсăр усă куракан çĕрсене Пĕрлехи информаци ресурсне кĕртмешкĕн инвентаризаци тума палăртнă. Малашне лаптăксем усăсăр выртмĕç.

■ **Г.ВАСИЛЬЕВ**

Чун ыратăвĕ

## Вахта килĕшсен-килĕшмесен те...

***Тăван ялăма кайсан Вадимпа /хăй ыйтрĕ те – ятне улăштартăм/ курнăçрăм. Вăл Мускав облаçĕнчи пĕр хулара çуртсем тăвать. Çур уйăх – унта, тепĕр çуррине ялта ĕçлет. Самай пысăк нухратпа таврăнать.***

– Вадим, вахта меслечĕ сана килĕшет-и? Кӳрентермеççĕ-и, вăхăтра тӳлеççĕ-и?

– Килĕшсен-килĕшмесен те ăçта та пулсан ĕçлемеллех. Специальноçа суйласа тăмалли çук халĕ. «Ку профессине юрататăп, теприне – çук», – тееймĕн. Çемьене ытлă-çитлĕ тытса тăма укçа çителĕклĕ кирлĕ. Унсăрăн мĕнле пурăнăн? Налук та тӳлемелле, ачасене шкула çӳретмелле... Сахал-им тăкакланмалли? Арăм ялта ача садĕнче ĕçлет, шалăвĕ ытла та пĕчĕк. Чăх кулли темерĕн. Тĕрĕссипе, кил-йыша укçа-тенкĕпе арçыннăн тивĕçтермелле.

– Тĕрĕсех калатăн-ха эсĕ. Анчах пĕрле пурăннине мĕн çиттĕр? Ачасене амăшĕ çеç мар, ашшĕ те кирлĕ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырура: «Арçыннăн çемьере пурăнмалла!» – тенĕ. Çавăнпа та вăл ЧР Министрсен Кабинечĕн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, предприяти ертӳçисемпе бизнес-пĕрлĕхĕн ял ĕçченĕсене ĕçпе тивĕçтерес тата вĕсен ĕç укçин шайне ӳстерес енĕпе пĕрле пурнăçламалли мерăсен комплексне туса хатĕрлеме сĕнет. Чăн малтанах халăхра «арçын профессийĕ» теме хăнăхнă ĕç вырăнĕсем йĕркелеме тăрăшмалла тет.

Пирĕн ял хуçалăхĕнче тӳлекен ĕç укçи – федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен хушшинче пĕчĕккисенчен пĕри. Çирĕп йĕркепе тӳлекен, пысăк шалуллă ĕç вырăнĕ пулманран халăх ялтан урăх вырăна куçать – Мускава, Санкт-Петербурга, Хусана ĕçлеме çӳрет. Çакă мăшăрсен хушшинчи хутшăнусене тата ачасене воспитани парассине япăх витĕм кӳрет.

Тăван республикăра тупăшлă ĕç вырăнĕ чăнласах тупаймастăн. Тăван ял тăрăхĕнче совхозран виçĕ колхоз турĕç. Вĕсем те пулин саланчĕç. Тавар хакĕсене ирĕке яни ырри патне илсе çитермерĕ. Рынок та рынок тесе халтан яраççĕ, хаксене вăл йĕркелет теççĕ. Çакна пире ĕнентерме тăрăшаççĕ. Таçти космосра пурăнмастпăр вĕт-ха эпир, пурнăçа лайăхлатасси хамăртан çеç килнине пурте лайăх пĕлетпĕр.

Вадим пĕрлешӳллĕ хуçалăхра шоферччĕ. Ял хуçалăх техникумĕнче куçăнсăр майпа вĕренсе агроном дипломне илчĕ. Анчах колхоз арканнăран юратнă специальноçпа ĕçлеймерĕ.

Техникумра каччă водитель профессине те алла илнĕччĕ. Пĕр хушă КамАЗа çӳретрĕ. Автомашинăна налук тӳлемелле тесе сутса ярсан – ĕççĕр тăрса юлчĕ. Кăштахран техника паркĕнче автослесарьте тăрмашма май килтерчĕ. Кунта та нумай вăхăтлăха мар.

Колхоз хавшасах пычĕ. Налукпа татăлман тесе унăн пурлăхне арестлерĕç, техникăн пĕр пайне йӳнĕ хакпах сутрĕç. Автомашина е трактор – маншăн пур пĕрех тесе – хăшне те пулин туянасшăнччĕ Вадим, анчах нухрат кирлĕ чухлĕ тупăнмарĕ. Халĕччен килти хушма хуçалăха йĕркелсе яратчĕ пулĕ, тен, фермера тухатчĕ-ши? Калама йывăр.

Хуçалăх пурлăхне укçаллă çĕнĕ чăваш йӳнĕпех туянчĕ. Колхозниксене парăма кĕнĕ ĕç укçине тӳлеме ячĕшĕн тенĕ пек сăмах пачĕ, кайран манса кайрĕ. Шалу ыйтма çинеçинех пыракансене часах вырăна лартрĕ: «Эсир ман патра ĕçлемен, эпĕ сире нимĕн те шантарман», – терĕ.

Çĕнĕ хуçа юхăнчăк ферма мана тăкак çеç кӳрет тесе юлнă выльăх-чĕрлĕхе йăлт сутса ячĕ. Халĕ тыр-пул çеç çитĕнтерет. Çуркунне механизаторсене актарать те – вырмачченех канлĕ тытать хăйне. Тырра вырса илсе вырнаçтарсан хĕлĕпех турпутевкăпа унта-кунта канма çӳрет.

Ял çыннисем вара ĕç вырăнĕ шыраса тĕнче касса çӳреççĕ. Нумайăшĕ тивĕçлĕ канăва тухнă. Çут тĕнчерен уйрăлакан та сахал мар. Çав вăхăтрах çуралакан пепкесен йышĕ ытла та пĕчĕк. Демографи лару-тăрăвĕ çивĕчленнĕрен ватăлать те йăмраллă чăваш ялĕ.

Çитĕннĕ çамрăксем хуласенче ĕç вырăнĕ тупса тĕпленеççĕ, çемье çавăраççĕ. Тăван кил-çурта таврăнакан сахал. Вадима çеç, çĕраннемĕре пĕчĕкрен юратса ӳснĕскере, хула пурнăçĕ килĕшмерĕ. Ялтах мăшăрланса тĕпленчĕ. Çӳрет çапла хăйĕн аллине ларакан арçынсемпе Мускава. Вахта килĕшсен-килĕшмесен те.

Ирĕксĕртен суйласа илнĕ пурнăç йĕркин пĕр пайĕ çул çинче иртнĕрен ывăнтарать, Мускава вĕçĕм кайни-килни йăлăхтарать те. Вăй-хал чакнăн, хавшанăн туйăнать. Стройка ĕçĕ вара çăмăл мар. «Тивĕçлĕ канăва тухса пулĕ-ши? – шухăшлать Вадим. – Унччен темле пулсан та чăтмаллах. Куç курĕ. Ачасем çемьеленсен мăнукăмсемпе пĕрле çу кунĕсенче пахчара йăпанăп».

■ **Александр ВИШНЕВСКИЙ**

## Демографи лайăхланать

Элĕк районĕнче кăçалхи нарăс уйăхĕнче 19 пепке çуралнă – пĕлтĕрхинчен 7 ача ытларах. Çав вăхăтрах 22 çын вилнĕ, 2013 çулхи нарăсринчен виççĕ нумайрах.

Пĕлтĕр çут тĕнчерен уйрăлнисен йышĕ кун çути курнисенчен 7 çын ытларах пулнă, кăçал – 3. Кăтарту Элĕк енре демографи пĕчĕккĕн те пулсан лайăхланса пынине пĕлтерет.

■ **В.ВАЛЕНТИНОВ**

**Кăларăма Валентин ГРИГОРЬЕВ хатĕрленĕ.**

# ТАМАША

## Ыйтăр – хуравлатпăр!

**Тăвансем чылайранпа ĕнтĕ сас-хура памаççĕ. Ытти çулсенче шăнкăравласа халтан яратчĕç: укçа кирлĕ, тепĕр чухне пулăшу ыйтса йăлăнатчĕç.**

**Паланкассинчи Тарас Тихăнĕ.**

Хисеплĕ Тиххăн Иванччă! Сирĕн пĕртте кулянма-пăшăрханма кирлĕ мар. Нуша çитсен хăйсемех шыраса тупĕç сире, çыру çырĕç е кĕсье телефонĕпе «салам» ярĕç. Сире паян чăрмантармаççĕ ахăр. Лăпланса, çут çанталăк илемĕпе киленсе пурăнăр.

* * *

**Хваттершĕн тӳлеме кайрăм. Кунсăр пуçне юсав ĕçĕсем пирки те сăмах тапратма тиврĕ. «Нурмальнăй чĕлхепе калаç!» тесе асăрхаттарчĕç мана çурт-йĕр кантурĕнче ĕçлекенсем. Чăваш Енре хăшĕ нурмальнăй чĕлхе-ши?**

**Улакĕсре ялĕнчи Карачăм Сахрунĕ.**

Пĕр шит чухлĕ те ан иккĕленĕр – Чăваш Енре чи нурмальнăй чĕлхе – чăваш чĕлхи. Паллах, урăхларах калаçакан та тупăнкалать-ха. Пирĕн шухăшпа, вĕсем хăйсем «нурмальнăй» çынсем мар. Кун пирки, хисеплĕ Сахрун Иванччă, вĕсене пĕрмай аса илтерме тăрăшăр.

### кулăш

## Кама итлемелле?

Иртнĕ уйăх вĕçĕнче Микиш пуçанам яла васкавлăн пыма чĕнчĕ. «Ĕне пăрулас вăхăт çитет, паянах çула тух – ĕç нумай, пуç хыçма та вăхăт çук» имĕш.

Ялтан çак хыпар килес умĕн пĕр хаçат куç тĕлне пулнăччĕ. «Услам çу – чăн-чăн наркăмăш, кĕлетке виçине ӳстерет, самăрлăх чирĕпе аптăраса ӳкес хăрушлăх сиксе тухать!» тесе хăратнăччĕ унта. Çакăн хыççăн хăрушă тĕлĕксем курма тытăнтăм: кашни кĕтесре «Услам çу, хăйма – сывлăхăн хаяр тăшманĕсем» тесе çырса çапнă пек.

Çук, ылтăн купи парнелесен те яла пымастăп, сутса ярăр çав ĕнене тесе хуравларăм пуçанапа хуньăма. Мана итлесе çаксем чĕлхесĕр янавара Ишек пасарне çавăтса кайнă иккен...

Тепрехинче ирхи апата хăвăн çимелле, кăнтăрлахине – сывăх тусупа «пайламалла», каçхи апата тăшманпа пайла текен сĕнĕве вуларăм. Чăн та, арăм пĕçернĕ апата хăш чухне тăшманах парас килет /е тăварсăр вăл, е çу, аш яма манса каять – ним тути те çук/. Мускав тухтăрĕ вара... ирхине пачах сĕтел хушшине лармалла мар, хырăм выççине этем кăнтăрла хыççăн кăна туйса çитет» терĕ. Вăт тамаша!

Çак этемех ирхине чупни сывлăхшăн шутсăр сиенлĕ тесе асăрхаттарчĕ. Эпĕ вара вырăн çинчен сиксе тăраттăм та урама тухса лăпăс-лăпăс чупма тытăнаттăм. Вăт ухмах! Ара, тухтăрсем иртнĕ çулсенче çапла тума сĕнетчĕç мар-и?

Пĕрре хулари Тĕп пасарта – Турра шĕкĕр, вăл юнашарах вырнаçнă – пан улми, исĕм çырли туянтăм. Чĕрĕ çимĕçе чи малтан вĕри шывпа çумалла тенине асра тытса, пан улмипе исĕм çырлине вĕри шыв янă витрене темиçе чиксе кăлартăм. Таçтан амакран мăшăрăм сиксе тухрĕ те икĕ чышкине чăмăртасах ятлама тытăнчĕ. «Бактерисемпе микробсене тĕп тăватăп!» хуравларăм эпĕ мăнаçлăн. «Вĕсене мар, усăллă витаминсемпе хутăшсене пĕтеретĕн эсĕ, айванскер!» – хирĕçлерĕ арăм. Кун çинчен вăл тин кăна темĕнле хаçатра вуласа пĕлнĕ иккен.

Нумай пулмасть, «сенкер ешчĕк» умĕнче саркаланса ларнă вăхăтра, кăтра пуçлă пĕр майра çу этем сывлăхĕшĕн шутсăр усăллă пулнине евитлерĕ. Вăт япала! Çак çу А, Д йышши витаминсемпе тулăх иккен, вĕсем çитмесен кирек кам та чипер утса пынă çĕртех пăлтăр-палтăр йăванса кайма пултарать тесе хăратрĕ. Пуçана ĕнене Ишек пасарне кăлăхах кайса сутнă иккен. Айван!

Те улма-çырлана вĕри шывра çуса витаминсене пĕтернĕрен, те услам çăва тиркенĕрен эпĕ... пульницăна лекрĕм-ха. Е хире-хирĕçле сĕнӳсене пула пуç çаврăнса кайрĕ-ши? Пĕлместĕп.

Тен, сывлăх пирки йĕркеленĕ кăларăмсене малашне сахалрах, тиркевлĕрех пăхма тытăнас.

■ Г.СТЕПАШИН

### йĕплĕ сăмах

## Ĕнсе хыççа шухăшласан...

✓ Çын валли шăтăк чавма ан тăрăш – ыттисем чавасса кĕтсе тăр, вăй-хална упра.

✓ Манăçу чирĕнчен сыватакан эмеле ăçта хунине манса ан кай – ку чи кирли.

✓ Парнешĕн те налук тӳлеттерме тытăнаççĕ имĕш. Эпĕ нумай пулмасть тусăма шанчăк «парнелерĕм» – налук виçи миçе тенкĕпе танлашĕ?

✓ «Пуçра шухăшсем выляççĕ» тетĕн-и? Вĕсене вăхăтра çăварлăхлама ан ман.

✓ «Этем вĕçме çуралман» теççĕ ваттисем. Анчах вĕçкĕнсемпе каппайчăксем кун пирки темшĕн манса каяççĕ.

✓ Вăхăт таппинчен ытла мала кайма ан тăрăш – кирлĕ мар çĕре çитсе тăрас хăрушлăх ӳсет.

✓ Пурнăç саккунĕсене уяман этемсем юристсем çырнă саккунсене те пăсса пурăнаççĕ иккен.

✓ Çамрăк чухне тунă йăнăшсемпе çылăхсене вăхăтра тӳрлетме тăрăшăр, ватлăхра юсанма вăхăт сахал юлать.

✓ Иртнине аса илсе йĕрекенсем: «Пуласлăх пирĕн лайăх», – тесе шантарсан – темшĕн кулаççĕ.

## Шкул ачисен хайлавĕсенчен

Нарспи япăх арăм пулнă, упăшкине вăл хăймапа тата майонезпа кăна тăрантарса усранă.

Аякра пăравус сасси таплаттарса пыни илтĕнсе кайнă.

Лисук сăнĕ-пичĕпе илемсĕр çуралнă, çавăнпа та ялан шукăль тăхăнса çӳреме юратнă.

Кимĕ илемлĕ çыранпа ярăнса пынă.

Революцишĕн пăшăрханакансем пĕрмай хĕрлĕ ялав çĕклесе çӳренĕ, вĕсене хирĕç тăракансем шурă ялавпа туслă пулнă.

Вăл кая юлса çемье çавăрнă, çав вăхăтра тантăшĕсем арăмĕсенчен уйрăлма та ĕлкĕрнĕ.

Ĕлĕк хресченсем пысăк шалу шыраса Çĕпĕре туха-туха кайнă, халĕ вара кашни тенĕ пекех пачах урăх енне – Мускава çул тытать. Ку вĕсен культура шайĕ хăпарса çитнине пĕлтерет.

**Геннадий ФЕДОТОВ хатĕрленĕ.**

*Уçнă çерем*

# 60 çул иртсен те асрах

***1954 çулхи пуш уйăхĕн 8-мĕшĕнче пире – М.Васильева /1923 çулта çуралнă/, В.Захарова /1921/, В.Петрова /1933/, Н.Иванова /1936/, П.Лисова /1935/ тата мана, В.Клопова /1935/ – Тăвайри МТС директорĕ Изосим Андреевич Ворожейкин хăйĕн пӳлĕмне пуçтарчĕ.***

– Алтайра çерем çĕр нумай. Вĕсене лайăх сухаламалла, тырă çитĕнтермешкĕн хатĕрлемелле, – тесе пĕлтерчĕ. Эпир ку хыпара хапăлласах йышăнтăмăр. Çул çине укçа-тенкĕ пачĕç, хавхалантарчĕç.

Тепĕр икĕ кунран КПСС райкомĕн лекци залне 7 сехет тĕлне пухăнтăмăр.

– Эсир унта та ырă тĕслĕх кăтартасса шанатпăр, район чысне çӳлте тытăр, – терĕ КПСС райкомĕн секретарĕ И.Иванов. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ В.Якимов пире телейлĕ çул тата ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума сунчĕ. Унтан пире комсомол путевки пачĕç. «Уçнă çерем», «Хурçă мĕнле хĕрнĕ», «Пĕрре çуркунне», «Хура çăкăр» тата ытти кĕнеке, купăс парнелесе савăнтарчĕç. Кĕçех трактор çуни çине лартнă будкăна вырнаçрăмăр, Канаша çул тытрăмăр.

– Пуйăс ыран, пушăн 11-мĕшĕнче пулать, – пĕлтерчĕç пире чукун çулăн кивĕ вокзалĕнче, регистрацилерĕç. Тепĕр кунне Мускав-Барнаул пуйăс çитрĕ. Çын нумай пухăнчĕ пире ăсатма, оркестр тĕрлĕ кĕвĕ вылярĕ. Чăваш Республикинчен каякансем валли пĕр вакунра вырăнсем уйăрнă.

– Едем мы, друзья,
в дальние края,
Станем новоселами и ты, и я, –

юрларăмăр çерем çĕр уçма каякансен гимнне.

Пуйăс кĕçех Хĕвел тухăç еннелле çул тытрĕ. Хусанта чарăнтăмăр. Оркестр унта та савăнăçлă кĕвĕ вылятчĕ. Пирĕн пуйăс вĕçне тепĕр икĕ вакун кăкарчĕç. Кĕçех Свердловск, Новосибирск станцийĕсем хыçа юлчĕç.

Барнаула çĕрле çитрĕмĕр. Чукун çулăн культура çуртне вырнаçтарчĕç. Тепĕр кунне пире тĕрлĕ çĕре кайма уйăрчĕç. Эпир Бийск хулине çитрĕмĕр. Уçă кузовлă автомашинăсемпе Большие Гринева ялне илсе кайрĕç, унтан лавсемпе «Шебалинский» МТСа çитерчĕç. Столовăйĕнче апатлантăмăр та хваттерсене вырнаçтарчĕç. Эпир Петьăпа М.Попов кил хуçалăхĕнче пурăнма пуçларăмăр. Каçхине клуба кайрăмăр, çерем çĕр уçакансемпе тĕл пулу иртрĕ. МТС директорĕ, комсомол секретарĕ тухса калаçрĕç, саламларĕç, вырăнти çынсем концерт лартрĕç. Кайран вăйăкулă пуçланчĕ. Пирĕн район каччи Петр Лисов купăспа чăваш кĕвви калама пуçларĕ те Шăхасанти Николай Амурский питĕ чаплă ташларĕ.

Тăватă кунран пире Новиково ялне илсе кайрĕç. «ДТ-54» маркăллă çĕнĕ тракторсем пачĕç. Манăн наставник А.Кирюхин пулчĕ. Петьăн – Мергер Карл нимĕç. Трактористсен бригадирĕ А.Петушковчĕ, ăна И.Крашловян белорус пулăшатчĕ. Ытти юлташсем Товарищ текен яла вырнаçрĕç. М.Ф.Попов кил хуçалăхне хваттере ячĕç пире. М.М.Поповăн ашшĕ иккен вăл. Тăвай енрен 6 çын, Комсомольски районĕнчен – 2, Елчĕк енрен – 2, Шăхасантан иккĕн пурăнтăмăр Новиково ялĕнче. Иккĕмĕш трактор бригадине лекрĕмĕр.

...Новиково ялне хыр вăрманĕ витĕр кĕмеллеччĕ. Вăрман тата Колхоз урамĕсем пурччĕ. Юлашкинчен асăннинче ĕне тата сурăх фермисем, тырă çапмалли йĕтем, трактор бригади пурччĕ. Çыранçи урамĕнче клуб, сакăр класс вĕренмелли шкул, ача çурчĕ, вăрман хатĕрлекен организаци, лавкка, колхоз правленийĕ вырнаçнăччĕ.

Новиково ялĕнчи трактор бригадинче ĕçлеме пуçласан хиртен улăм турттараттăмăр, Бийск хулине те рейс хыççăн рейс тăваттăмăр.

Çур аки пуçланчĕ. Малтан ыраш калчисене сӳрелеме тухрăмăр. Унтан тырă акма вырăнсем хатĕрлеме тытăнтăмăр. Пире, çамрăк трактористсене, культиваци тутаратчĕç ытларах. Аслăраххисем виçĕ сеялкăллă агрегатпа тырă акатчĕç. Ака вĕçленсен колхоз правленийĕ уяв йĕркелерĕ. Çур акинче палăрнисене парнепе хавхалантарчĕç. Унтан сĕтел хушшине чĕнчĕç, тĕрлĕ апатçимĕçпе хăналарĕç.

Çакăн хыççăн колхоз валли вăрман касма илсе кайрĕç. Унтан таврăнсан курăк çулма хатĕрленмешкĕн пуçларăмăр. Çерем çĕрсене сухалама тӳр килмерĕ. Эпир пысăк, пуян колхоза лекнĕччĕ çав.

1954 çулта тырă питĕ ăнса çитĕнчĕ. Вырмана çынсем хастар хутшăнчĕç. Чалăшрах вырăнлă е хĕсĕк лапамра çитĕннĕ тырра лаша кӳлсе «Лобогрейкăпа» выратчĕç. Тырра вăхăтра пухса кĕртмешкĕн пулăшма Мускав, Ставрополь облаçĕсенчи водительсемпе комбайнерсем, Бийск хулинчен студентсемпе салтаксем çитнĕччĕ. Вырма пĕтсен кĕрхи çĕртме тума пуçларăмăр. Чӳк уйăхĕнче манăн çĕр-шыв умĕнчи тивĕçе пурнăçлама вăхăт çитрĕ. Н.Иванова вара 1955 çулта шинель тăхăнтартрĕç. Ыттисем пурте киле таврăннă. Новиково ялĕнче пирĕн районтан Василий Захаров кăна юлчĕ, унтах çемье çавăрнăччĕ вăл. Петр Лисов эпĕ ĕçлесе илнĕ тырра Бийск хулинчи элеватора леçсе Канашри элеваторта илме ирĕк паракан документ тутарса килнĕччĕ. Атте уншăн питĕ савăннăччĕ, 800 килограмм тулă илнĕ çывăх çыннăм.

1988 çулта Новиково ялне тепĕр хут кайса куртăм. Ун чухне Василий Захаров пурăнатчĕ, анчах суккăрччĕ. Киле каялла таврăнасси пирки сăмахламанччĕ вăл.

Çерем çĕр уçма кайнăранпа 60 çул çитет. Пĕрле кайнисенчен халĕ эпĕ кăна пурăнатăп. Николай Иванов кăçал çĕре кĕчĕ. Вăл салтакран таврăнсан пенсие кайичченех колхозра вăй хунă, тĕрлĕ наградăна, çав шутра орденсене те, тивĕçнĕ.

Эпир ултă теçетке çул каялла çерем çĕр уçма пысăк хавхаланупа кайни, килтен аякра ĕçлени халĕ те асрах.

■ **Варсонофий КЛОПОВ**



*● Çерем çĕр уçма хутшăннă механизаторсем – Тăвай енри Н.Ивановпа В.Клопов.*

# Тĕлĕкре те Алтай çеçен хирне куратăп

***Канашри ял хуçалăх механизаци шкулĕнчен вĕренсе тухнă-тухманах Йĕпреçри машина-трактор станцине килсе лекрĕм. «Сирĕн бригадăн «Заря» колхоз уйĕсене сухаламалла пулать, – ăнлантарчĕ мана МТСăн ун чухнехи директорĕ Николай Константинов, пархатарлă ĕçшĕн хăй вăхăтĕнче çĕр-шывăн чи пысăк наградине – Ленин орденне – тивĕçнĕскер. – Хăвăн пурнăçунти пĕрремĕш çур акине тăрăшса хатĕрленнипе кĕтсе илессе шанатăп...»***

Ырă ĕмĕт-тĕллевпе хавхаланса тытăннăччĕ ĕçе. Анчах та шăпа урăхла килсе тухрĕ. 1954 çулхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче КПСС Тĕп Комитечĕн çамрăксене çĕр-шыври çĕнĕ тата парлак çĕрсене уçма чĕнсе калани пичетленнĕ хыççăнах эпĕ тантăшсемпе романтиксен йышне тăрас терĕм. Тепĕр икĕ эрнерен пире пуйăс Алтай крайĕн тĕп хулине – Барнаула илсе çитерчĕ. Парти чĕнĕвне хĕрӳ ĕçпе хуравлама çирĕп тĕллев тытнă вун сакăр çулти маттурсене ăшшăн кĕтсе илчĕ вырăнти халăх. Эпир, Йĕпреç тăрăхĕнчен кайнă 10 механизатор, асăннă крайăн Благовещенск районне кĕрекен «Новый путь» колхоз членĕсем пулса тăтăмăр. Кашнинех çĕнĕ ДТ-54 трактор шанса пачĕç. Тахçан хамăрăн йăхташăмăрсем пурăннă авалхи çĕр çине Чăваш çĕр-шывĕнчен тепĕр хут ура ярса пуснă малтанхи чăвашсем пултăмăр. Çу каçипех куçпа виçейми анлă уй-хиртен кĕмесĕр ĕçлени сая каймарĕ: пĕрремĕш çулах вăйлă тыр-пул çитĕнтертĕмĕр, унăн кашни гектарĕ вăтам шутпа 25 центнертан кая мар тухăç пачĕ. Пирĕн бригада районта кăна мар, Алтай крайĕнче те мала тухса комсомол крайкомĕн куçса çӳрекен вымпелне тивĕçрĕ. Тăван халăх ятне ямарăмăр, унăн чыс-сумне Алтай тăвĕсенчен те çӳлерех çĕклеме пултартăмăр. «Чăвашсем – маттур халăх, – терĕ пире партин Благовещенск райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчен 3 орденпа таврăннă Николай Беспалов. – Эпĕ сирĕн паттăрлăх çинчен партин Чăваш обкомне шăнкăравласа пĕлтертĕм ĕнтĕ».

Çĕнĕ çĕрти çур акинче те, вырмара та явапла çынсем тăтăшах пирĕн патран татăлманнине те асăнса хăвармалла пулĕ. Колхоз ертӳçи те, Кучук ял канашĕн пуçлăхĕ те ĕç-хĕлĕмĕрпе интересленсех тăратчĕç, вăраха ямасăр татса памалли ыйту сиксе тухсан ăна пурнăçа кĕртессине тĕпе хуратчĕç. Вĕсен айăпĕпе ĕç-пуç чарăнса тăни пĕрре те пулман. Çакна мĕншĕн аса илтĕм-ха? Хальхи вăхăтра укăлча умне хĕрӳ тапхăр çитсе тăрсан та хăш-пĕр ертӳçĕ хăнк та сикмест. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен хушшинче вара хăш уйра мĕнле культура çитĕннине пĕлменнисем те пур. Манăн шухăшпа, хуçалăх правленийĕпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕн администрацийĕн кирек хăçан та пĕр-пĕрне пулăшса та ăнланса ĕçлени кирлĕ. Унсăрăн тĕллевлĕ çитĕнӳ тăвасси пирки калаçма та кирлĕ мар...

Эпĕ аса илӳсенче паян та çамрăклăх йĕрĕсене хăварнă Алтай тăрăхне çитсе тухатăп. Шел, çак çĕр çинче пĕр çур акипе пĕр вырма ирттерме кăна шăпа тухрĕ мана. 1954 çулхи юпа уйăхĕн варринче Совет Çарне ăсатрĕç Кучук çыннисем. Çак ятпа ялти Культура çуртĕнче ăсату каçĕ иртрĕ. Унта салтак тивĕçне чыслăн пурнăçланă хыççăн каллех çакăнта килме сăмах патăм. Мĕн тетĕр? «Новый путь» колхозăн тĕп ялне – Кучук аулне çамрăк мăшăрăмпа пĕрле килсе çитрĕмĕр. Мана çавăнтах «хурçă ут» çирĕплетсе пачĕç, Евлампи колхозăн ĕне ферминче ĕçлеме пуçларĕ. Çапла вара çерем çĕрсем çинчи пурнăç хăй еккипе малалла тăсăлчĕ...

Вăхăт иртнĕçемĕн, çӳçсем кĕмĕл тĕспе витĕннĕçемĕн чун-чĕре хамăр тăрăхаллах туртрĕ. Тивĕçлĕ канăва тухиччченех Шупашкарти «Металлист» заводра вăй хутăм. Кĕсьене пенсионер тата ветеран кĕнекисене чиксен çемьепе Йĕпреç поселокне таврăнтăмăр. Халĕ Евлампия Васильевнăпа иксĕмĕрех ватлăх кунĕмĕрсене кĕскетсе пурăнатпăр. «Çĕнĕ çĕрсем уçма кайнисен чи малтанхи йышĕнче пулнисене чысласа çĕкленнĕ урама Çĕнĕ урам тесе ят патăмăр. Эсир унта ăнсăртран килсе лекмен, – терĕ пире Йĕпреç хула тăрăх администрацийĕн пуçлăхĕ Вячеслав Анисимов. – Çĕнĕ урам хушăнсах пытăр, ача-пăча сассипе янрасах тăтăр...»

Вячеслав Анисимович ырă хыпар пĕлтерчĕ: çерем çĕр уçма тытăннăранпа 60 çул çитнине чысласа Йĕпреç хула тăрăхĕн администрацийĕ сывăх кунсенчех савăнăçлă тĕл пулу йĕркелет-мĕн. Хыпарĕ чăннипех савăнтаракан скер, анчах чун-чĕре хыттăн тапса илчĕ çакăн хыççăн: «Культура çуртне камсем пырĕç-ши?» Кунашкал иккĕленме сăлтав çук мар: 60 çул каялла Алтай çеçен хирĕсене пĕрремĕш ушкăнпа тухса кайнă 10 çамрăкран эпĕ кăна сывă пурăнатăп-çке!»

■ **Леонид ПЕТРОВ, ĕç ветеранĕ.**
Йĕпреç поселокĕ

*Уйăхлăх*

## «Ăçта вилĕм сутаççĕ – пĕлтер!»

Çак ятпа ЧР прокуратури право хуралĕн, патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле йĕркеленĕ уйăхлăх пуçланчĕ. Вăл ака уйăхĕн 17-мĕшĕччен пырать.

Çак тапхăрта республика прокуратуринче /8352/ 39-20-12 – ĕç кунĕсенче 9-тан пуçласа 18 сехетчен; 62-48-49 – талăкĕпех/, ЧР Шалти ĕçсен министерствинче /8352/ 24-16-55 е 02/, Наркотĕрĕслев управленийĕнче /8352/ 23-01-00/ наркотиксемпе усă куракан, вĕсене сутакан вырăнсем пирки анонимлă майпа пĕлтермелли шанăç телефонĕсем ĕçлĕç. Çавăн пекех СМС-пĕлтерӳсене те йышăнаççĕ – 8-937-013-93-41 номерпе. Интернетри электрон почтипе те пĕлтерме пулать – prokur@cap.ru адреспа.

Унсăр пуçне тĕрлĕ вырăнта çырса хатĕрленĕ пĕлтерӳсене ямалли ешчĕксем вырнаçтарнă. Шупашкарта унашкаллисем «Каскад», «МТВ-Центр» суту-илӳ центрĕсенче, «Шупашкар» пасарта, республика прокуратурин, хула администрацийĕн çурчĕсенче, Юстици çуртĕнче, Тĕп автовокзалта, «Салют» культура керменĕнче, «Ача-пăча тĕнчи» лавкка патĕнчи пĕлтерӳсен хăми çинче пур. Телефонпа, Интернет урлă яракан пĕлтерӳсем, ешчĕксенчи çырусем тăрăх прокуратура представителĕсем тивĕçлĕ тĕрĕслев ирттерĕç.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**


## реклама пĕлтерӳ

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

Администрация Кошноруйского сельского поселения Канашского района проводит открытые торги (аукцион) по продаже права на заключение договора аренды земельных участков для ведения сельскохозяйственного производства, сроком на 20 лет:

| № лота | Наименование | Кадастровый номер | Местонахождение земельного участка | Площадь, кв. м. | Начальный размер годовой арендной платы з/у, руб. | Сумма задатка, руб. | Шаг аукциона, руб. |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1. | Зем. участок, лот № 1 | 21:11:000000:3010 | Чувашская Республика, Канашский район, с/пос. Кошноруйское | 4338400,0 | 104000,00 | 20800,00 | 5200,00 |
| 2 | Зем. участок, лот № 2 | 21:11:050302:81 | Чувашская Республика, Канашский район, участок находится в 1680 м по направлению на северо-запад от д. 1 по ул. Советская в д. Кошноруй | 606309,0 | 15800,00 | 3160,00 | 790,00 |
| 3. | Зем. участок, лот № 3 | 21:11:050101:70 | Чувашская Республика, Канашский район, с/пос. Кошноруйское | 1181500,0 | 30700,00 | 6140,00 | 1535,00 |
| 4. | Зем. участок, лот № 4 | 21:11:0:465 | Чувашская Республика, Канашский район, участок находится в 100 м по направлению на запад от д. 1 по ул. 50 лет Октября в д. Ближние Сормы | 409964,0 | 10650,00 | 2130,00 | 532,50 |
| 5. | Зем. участок, лот № 5 | 21:11:0:448 | Чувашская Республика, Канашский район, участок находится в 350 м по направлению на восток от д. 19 по ул. Кооперативная в д. Ближние Сормы | 316762,0 | 8200,00 | 1640,00 | 410,00 |
| 6. | Зем. участок, лот № 6 | 21:11:050101:36 | Чувашская Республика, Канашский район, участок находится в 227 м по направлению на восток от д. № 3 по ул. Кольцова в д. Дальние Сормы | 715788,0 | 18600,00 | 3720,00 | 930,00 |
| 7. | Зем. участок, лот № 7 | 21:11:050101:71 | Чувашская Республика, Канашский район, с/пос. Кошноруйское | 917400,0 | 23850,00 | 4770,00 | 1192,50 |

К участию на торгах допускаются юридические и крестьянские (фермерские) хозяйства. Категория земель - земли сельскохозяйственного назначения.

Торги состоятся 22 апреля 2014 года в 10.00 часов в здании администрации Кошноруйского сельского поселения Канашского района по адресу: Канашский район, д. Кошноруй, ул. Ленина, д. 35.

Последний срок приема заявок для участия на торгах 17 апреля 2014 года до 17 часов.

Телефон для справок: 67-4-43.

## ПРОДАЮ

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Доставка. Т. 444433.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**154.Грабли** от 24 тыс. руб., **плуги, картофелесажалки, окучники, фрезы, косилки.** Низкие цены. **Все новое!** Доставка! Тел.: 89278516858, 89379559802.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельных участков из земель сельскохозяйственного назначения, для сельскохозяйственного производства в аренду сроком на 49 лет:

- с кадастровым номером 21:08:150101:75, площадью 273466 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, р-н Батыревский, с/пос. Тойсинское;

- с кадастровым номером 21:08:000000:3769, площадью 21094 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, р-н Батыревский, с/пос. Тойсинское.

Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, село Батырево, пр. Ленина, д. № 5, каб. № 7. Справки по телефону: 8(83532)6-14-26.

## РАБОТА

**27.Кладовщики, комплектовщики, грузчики.** З/п 34000 руб. Вахта. МО. Прямой работодатель. Т. 89278512030.

**28.Водители-экспедиторы.** З/п 40000 руб. Вахта. МО. Прямой работодатель. Тел. 8-927-851-20-30.

**29.Охранники с удостоверением.** З/п 36000 руб. Вахта. Москва. Прямой работодатель. Т. 8-927-851-20-30.

**100.Требуются монолитчики.** Т. 8-937-952-58-67.

## ОСТОРОЖНО - ГАЗ!

**Уважаемые граждане!**

С наступлением весны происходит интенсивное таяние снега, возможны размывы и движение грунта, оползни на склонах оврагов, затопление территорий, находящихся в зоне воздействия паводковых вод. Всё это может привести к возникновению аварийных ситуаций на газораспределительных сетях и внутренних устройствах газоснабжения.

**ОАО "Газпром газораспределение Чебоксары" просит жителей Чувашской Республики** в целях обеспечения безопасности и предотвращения возможных аварий и чрезвычайных ситуаций на газовых сетях проявлять повышенную бдительность. При обнаружении повреждений и деформаций газопроводов, размывов грунта на их трассах необходимо срочно сообщить об этом в газовую службу.

**Организациям по обслуживанию жилищного фонда, собственникам газифицированных зданий** необходимо обеспечить выполнение требований "Правил и норм технической эксплуатации жилищного фонда" и других нормативных документов, для чего:

- проводить работы по очистке крыш зданий от снега и сосулек, падение которых может угрожать надземным и фасадным газопроводам;

- содержать в технически исправном состоянии вентиляционные каналы, дымоходы и их оголовки;

- не загромождать места расположения газовых колодцев, коверов подземных газопроводов, очищать от снега и льда крышки люков колодцев смежных с газопроводами инженерных сетей;

- обеспечить систематические проверки отсутствия запаха газа в технических подпольях и подвалах жилых домов;

- своевременно заключать договоры со специализированными организациями на техническое обслуживание и ремонт внутренних устройств газоснабжения.

**Уважаемые абоненты!** Не допускайте пользования газовыми приборами при отсутствии или нарушении тяги в дымовых и вентиляционных каналах, при наличии запаха газа, при неисправностях газовых приборов или их систем автоматики. Не допускайте самовольную установку, замену и ремонт газоиспользующего оборудования, монтаж и демонтаж газопроводов.

**При появлении запаха газа** в квартире, подъезде, подвале, во дворе дома, на улице необходимо немедленно позвонить в аварийно-диспетчерскую службу газового хозяйства **по телефону 04**, с мобильного телефона **104** либо **112.**

Не дожидаясь приезда аварийной бригады, **принять необходимые меры безопасности -** проветрить помещение, не допускать использования открытого огня, не включать и не выключать электрические приборы, не пользоваться электрозвонками, не курить. Предупредить об этом окружающих.

**Соблюдение мер предосторожности позволит обеспечить безопасность.**

ОАО "Газпром газораспределение Чебоксары"
*Лицензия Ростехнадзора от 11.06.2010 №ВП-00-011658 (ЖКС).*



чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор служби Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор А.В.СЕРГЕЕВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".

ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7254. Заказ 945.